# АЧАСЕН ПУПЛЕВ ХĂНĂХĂВĔСЕНЕ АТАЛАНТАРАССИ

## Вĕрентӳллĕ вăйăсен пуххи

Шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине
2–3 çулхи ачасемпе пурнăçлакан воспитательсем валли
хатĕрленĕ меслет кăтартăвĕ

Шупашкар
2022

УДК 373.2
ББК 74.102
А 97

ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

Пухса хатĕрлекенĕсем:
***И.В. Ядранская***, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕн ертӳçи,
***Л.А. Смирнова,*** Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕн методисчĕ

Пособие хатĕрлеме хутшăннă педагогсем:
***А.В. Малова***, Канаш районĕн Сиккассинчи «Хурăн» ача сачĕн ертӳçи,
***В.В. Мурзукова***, Канаш районĕн Сиккассинчи «Хурăн» ача сачĕн воспитателĕ,
***Н.С. Шпакова***, Канаш районĕн Сиккассинчи «Хурăн» ача сачĕн воспитателĕ

А 97 **Ачасен пуплев хăнăхăвĕсене аталантарасси:** вĕрентӳллĕ вăйăсен пуххи / И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, 2022. – 79, [1] с.

Кĕнекере 2–3 çулхи ачасен чăвашла пуплевне аталантарас ыйтусене çĕкленĕ, ачасемпе иртермелли вăйăсен тĕллевне, йĕркине çырса панă. Вĕренӳ хатĕрне «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» программăпа ĕçлекен педагогсене пулăшас тĕллевпе йĕркеленĕ.

**УДК 373.2**
**ББК74.102**

© И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова, пухса хатĕрлени, 2022
© ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, 2022

# УМĔН КАЛАНИ

2–3 çулхи ачасен пуплев хăнăхăвĕсене аталантармалли вĕрентӳллĕ вăййăсен пуххине ача садĕнче ĕçлекен педагогсем валли хатĕрленĕ.

Пособи «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» (Н.Е. Вераксы, Т.С. Комарова, М.А. Васильева редакциленĕ) программа çинче никĕсленет.

Кĕнекере пурĕ 60 вĕрентӳллĕ вăййă (çурла – авăн уйăхĕсенче эрнере пĕрер вĕрентӳлле вăййă, юпа уйăхĕнчен пуçласа çу уйăхĕ вĕçĕччен кашни эрнере икшер вĕрентӳллĕ вăййă ирттерме сĕннĕ).

Виçĕ çула кайнă ачасен ăс-тăн аталанăвĕ таврари çынсен кулленхи пурнăçĕнче иртекен лару-тăрупа çыхăннă. 2–3 çулхи ачана асли унпа пĕрле ĕçлени, выляни, ĕç тунă чухне хавхалантарни, çитĕнӳсемшĕн мухтани кирлĕ. Çитĕннисен пурнăçĕпе ытларах интересленни, вĕсенчен пулăшу ыйтма хăнăхни, çине-çинех *ку мĕн? мĕнле? мĕншĕн? ăçта?* ыйтусемпе хутшăнни те ачана мĕн шухăшланине сăмахпа калама вĕрентет, пуплеве аталантарать.

Ку тапхăрта ачасен пуплевĕ кулленех пуянланса пырать. Ачасем танлаштарма хăнăхса пыраççĕ, пĕрпеклĕх тупма вĕренеççĕ, ансат пĕтĕмлетӳсем тума пăхаççĕ.

Çак çулсенчи ачасем пĕчĕк калавсем итлеме хăнăхаççĕ, кĕске калаçăва явăçма тăрăшаççĕ, хăйсен ĕçĕсем çинчен каласа пама вĕренсе пыраççĕ. Çавăнпа та воспитателĕн ачан тимлĕхне анлăлатма сăмах йышне пуянлатмалли майсем туса памалла. Çавăн пекех ачан ĕçне пуплевпе йĕркелеме хистемелле: мĕн туни, мĕн тăвасси çинчен каласа пама вĕрентмелле.

Икĕ çулхи ачан сăмах йышĕ кунсерен ӳссе пырать, вĕсем тĕсе (хĕрлĕ, сарă, кăвак, симĕс), япалан пысăкăшне (пысăк – пĕчĕк), хăш-пĕр пахалăха (сивĕ – вĕри, йӳçĕ – пылак) палăртакан сăмахсемпе, вырăна кăтартаканнисемпе (лере, унта, хыçра, умра) тата ыттине те ăнланса усă курма тытăнаççĕ. Ку тапхăрта ачасем пуплев урлă тăван чĕлхен грамматика тытăмĕпе паллашаççĕ: хальхи, иртнĕ, пулас ĕçе палăртакан предложенисен пĕлтерĕшне ăнкарма хăнăхаççĕ, пуплевре нумайлă хисеппе, вырăн пĕлтерĕшлĕ хыç сăмахсемпе усă курма вĕренеççĕ.

Çапах та пуплев аталанăвĕ ачасен тĕрлĕ шайра пулса пыма пултарать: пĕрисем ăнланаççĕ те сăмахсене уйăрса калаçаççĕ, теприсем ăнланаççĕ, анчах хăйсем сахал пуплеççĕ. Çавăнпа та аслисен ачасене кăсăклантарса яма тăрăшмалла, сăмахсене хăйсем хыççăн çине-çинех калаттармалла, йăпатса, илĕртсе калаçăва явăçтармалла.

# ÇУРЛА – АВĂН УЙĂХĔСЕНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**Ача сачĕн территорийĕ тăрăх çул çӳрени**

**Тĕллевсем**: ачасене ушкăнра ĕçлеме вĕрентесси; воспитателе итлеме, вăл каланă предложенисене ăнланма, хушнă ĕçсене тума, мĕн тунине сăмахпа калама хăнăхтарасси.

Вăйă йĕрки

Воспитатель ачасемпе калаçу пуçарать.

В о с п и т а т е л ь. Çул çӳреме питĕ интереслĕ! Çĕннине нумай пĕлме тата тĕлĕнмелле япаласем тупма пулать. Кам манпа пĕрле ача сачĕн территорийĕ тăрăх кăсăклă çул çӳреве тухас тет?

Воспитатель çула тухма хатĕррисене ятран асăнса тухать. Хăй вĕсемпе пĕрле пулма хавассине çирĕплетсе хăварать.

В о с п и т а т е л ь. Ульха, эсĕ те манпа, Наçтаç, эсĕ те, Петĕр те пирĕнпе…

В о с п и т а т е л ь. Айтăр кайрăмăр-кайрăмăр-кайрăмăр. (*Воспитатель ачасене хăй хыççăн ертсе пырать.*) Эпир çула тухрăмăр.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, мĕнле хитре сирень тĕмĕ. Эсир ăна куратăр-и? «Эпир сана пĕлетпĕр, малалла çул çӳретпĕр», – тесе калăр-ха тĕмме. Алă сулса сывпуллашар сиреньпе. Ак çапла! (*Алăпа сулать.*) «Сывă юл, сирень тĕмĕ!» – тесе калăр. Эпир кайрăмăр-кайрăмăр-кайрăмăр. Акă хурăн патне те çитрĕмĕр. Айтăр-ха хурăна та сывлăх сунар.

А ч а с е м. Сывлăх сунатпăр. Салам, хурăн.

В о с п и т а т е л ь. Сывлăх сунатпăр, хурăн, сывлăх сунатпăр, пикеçĕм! Илтетĕн-и, сана Анна сывлăх сунать, Петĕр те, Тарье те… (*Уйрăм хуравсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Малалла кайрăмăр, кăшăлсем (обручсене ункăсем теме те юрать) тупрăмăр. Хитре кăшăлсем, симĕс, пысăк. Миçе симĕс кăшăл куратăр эсир, ачасем, кунта? (*Иккĕ.*) Мĕнле лайăх! Сиксе илме пулать. Ак çапла. Кăшăл ăшне! Кăшăл ăшĕнчен тухатпăр. Кăшăл ăшне! Каялла тухатпăр. (*5–6 хутчен.*) Халĕ эпĕ пĕр кăшăлне çĕр çине хуратăп. Ун витĕр *упаленсе тухма* пулать. Туса пăхар-ха.

В о с п и т а т е л ь. Эпир тӳрех утатпăр. Вĕрене (тирек, çăка...) патне çитетпĕр. Йывăç çумĕнче çулçăсем тупатпăр. Вĕрене çулçисем мĕнле-ха вĕсем?

А ч а с е м. Пысăк, шултра, тĕрлĕ тĕслĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кам мĕн тĕслĕ çулçă илчĕ? Кăтартăр-ха? Петĕрĕн симĕс çулçă, Ульхан – хĕрлĕ, Мĕтрин – сарă. Камăн симĕс çулçă? Çĕклесе кăтартăр. Вара антарăр. Камăн сарă çулçă? Кăтартăр-ха? Халĕ пурте хăвăр çулçăсене çӳлелле ывăтăр та вĕсене тытма тăрăшăр. Ак çапла. *(3–4 хутчен кăтартать.)*

В о с п и т а т е л ь. Çулçăсем çине вĕрĕр, вĕçсе çӳреччĕрех. Эпир вара малалла каятпăр. Аякка каятпăр. Ача сачĕн вăрттăн вырăнĕсене çитсе куратпăр. Унта мул пытарнă теççĕ. Ăна тупсан лайăх пулĕччĕ-ха та!

Ачасем воспитатель ертсе килнĕ вырăна тимлĕн пăхса çаврăнаççĕ. Мул тупаççĕ. Тĕслĕхрен, хутаç, ун ăшĕнче тĕрлĕ тĕслĕ варинккесем. Вĕсем витĕр хăйăр яма пулать. Ачасем хăйсем вылякан лаптăка таврăнаççĕ те варинккесемпе выляççĕ. (Пĕчченшерĕн е икшерĕн, пĕри варинкке тытса тăраканни, тепри хăйăра пĕчĕк кĕреçепе ярса тăраканни.)

Пӳлĕме таврăнсан воспитатель ачасемпе çул çӳрени çинчен калаçу ирттерет.

***Асăрхаттарни.*** Тепре çула тухассăн ачасем шăнкăрав тупма пултараççĕ. Ăна шăнкăртаттарса тĕрлĕ тĕслĕ пурăллă ешчĕк тупаççĕ. Пурăпа асфальт çинче мĕн те пулсан ӳкереççĕ. Вылямалли лаптăка таврăнсан воспитатель хатĕрленĕ «кукăле» «тутанса пăхаççĕ». «Хăналанă» майăн воспитатель чăваш халăх юрринчи сăмахсене калать:

Кукаçипе куками
Кукăль пĕçереççĕ,
Кукăль пĕçереççĕ,
Сарă çу сĕреççĕ.

Ачасем пĕр е икĕ кукăль суйлаççĕ, çинĕ пек тăваççĕ.

*2-мĕш вăйă*

## Группăри çул çӳрев

**Тĕллевсем**: ачасене ушкăнпа ĕçлеме вĕрентесси; воспитателе илтме, итлеме, вăл каланă предложенисене ăнланма, хушнă ĕçсене тума, мĕн тунине сăмахпа калама хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Пӳлĕмре (группăра) çӳренĕ май ачасем ăçта мĕн выртнине астуса юлаççĕ. Асăрхама (сăнама) хăнăхаççĕ. Тĕслĕхрен, кĕнеке кĕтесĕнче çĕнĕ кĕнеке тупаççĕ; пытаннă упана тĕл пулаççĕ, унпа пытанмалла выляççĕ (кайран ачасем пытанаççĕ, упа шырать).

*3-мĕш вăйă*

## Пирĕн кам маттур?

**Тĕллевсем**: ачасене ăшă кăмăллă пулма, пĕр-пĕрне хисеплеме, хăйсен тантăшĕсен ячĕсене астуса юлма вĕрентесси, ютшăнма пăрахтарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Вăййа урамра та, пӳлĕмре те выляма юрать.
Ачасем пукансем çинче лараççĕ. Воспитатель Н. Ваçанкка сăввипе кĕвĕленĕ «Тух-ха, Ванюк» юрра юрласа парать. Ачан хăй ятне илтсен ура çине тăмалла, тантăшĕсен умне тухмалла.

В о с п и т а т е л ь (*юрлать*).

**Тух-ха, Ванюк**

Тух-ха, Ванюк, пирĕн ума,
Эсĕ ташша пит ăста.
Кăвва, кăвва, кăвва, кăвва,
Кăвва, кăвва, тут, тут!
Ташласа пар, савăнтар,
Эпир алă çупатпăр!
Кăвва, кăвва, кăвва, кăвва,
Кăвва, кăвва, тут, тут!

В о с п и т а т е л ь. Ванюк сарă çӳçлĕ, хура куçлă, хитре, вăйлă ача, макăрманскер. Ульха савăнăçлă, хăйĕн Марье пуканине юрататъ, юрăсем юрласа парать. Ульха, ачасене юрласа паратăн-и? Эпĕ сана пулăшатăп.

У л ь х а. Юрлатăп.

В о с п и т а т е л ь. Мĕтри лайăх, Мĕтри чипер. Вăйлă, çапăçмасть. Çӳллĕ башньăсем тума пĕлет...

5–6 ачана мухтасан воспитатель пурне те хăй патне чĕнет.
Вĕсене икшерĕн тăма ыйтать. Пĕр-пĕрне ыталама сĕнет.
Воспитатель юлташ тупайман (тупас темен) ачасене çупăрлать.

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ачасем питĕ маттур. Ырă кăмăллă, хитре, ăслă, савăнăçлă. Эпĕ сире пурне те питĕ хытă юрататăп.

Çак вăййа çулталăк тăршшĕпех выляма юрать.

*4-мĕш вăйă*

## Марьепе Мулкач

**Тĕллевсем**: ачасене ирхине ашшĕ-амăшĕпе лăпкă, йĕмесĕр сывпуллашма хăнăхтарасси; сывпуллашу сăмахĕсене калама вĕрентесси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасене теттесем кăтартса сăмах пуçлать.

В о с п и т а т е л ь. Амăшĕ Марьене ача садне леçсе янă. Амăшĕ кайсан Марье макăрма тытăннă. Пĕррехинче макăракан Марье патне Мулкач пырать.

М у л к а ч. Эсĕ хăвăн аннӳне юрататăн-и?

М а р ь е. Юрататăп.

М у л к а ч.  Апла пулсан мĕншĕн макăратăн?

М а р ь е. Манăн аннене ярас килмест.

М у л к а ч.  Япăх! Питĕ япăх!

М а р ь е (*тĕлĕнсе макăрма чарăнать*). Мĕн япăх? Мĕншĕн япăх?

М у л к а ч. Эсĕ макăратăн та, аннӳ вара хурланать. Эсĕ кунĕпех кунта макăратăн тесе шутлать вăл. Аннӳ пăлханать, ĕçре ĕçлеймест, сан çинчен шутлать. Унăн пуçĕ ыратма пуçлать, температура хăпарать. Аннӳ те макăрма тытăнать.

М а р ь е.  Чăнах-и? Мĕн тăвас-ши?

М у л к а ч. Ыран аннӳпе сывпуллашнă чухне ăна: «Аннеçĕм, чипер кай. Эпĕ макăрмастăп», – тесе кала.

Ачасем Упа макăрса килнине кураççĕ: «Ă-ă-ă… ĕ-ĕ-ĕ…».

А ч а с е м. Мĕн пулнă? Эсĕ мĕншĕн макăратăн?

У п а. Анне ĕçе кайнă. Вăл манпа юлаймасть. Унăн чирлĕ упа çурисене сыватмалла. Ăна ĕçре кĕтеççĕ.

Ачасем май пур таран Упана лăплантараççĕ, макăрма юраманнине калаççĕ, амăшне кӳрентермелле маррине ăнлантараççĕ. Упана амăшĕпе сывпуллашма вĕрентеççĕ.

***Асăрхаттарни.*** Тепрехинче Мулкач тилĕ çурине (тигр çурине, кăвакал чĕппине т. ыт. те) ăс парать, ирхине ачасем ашшĕ-амăшĕпе мĕнле сывпуллашни çинчен каласа парать (2–3 тĕслĕх): «Аннеçĕм, сывă пул! Манăн макăрма вăхăт çук. Мана юлташсем (теттесем) кĕтеççĕ».

# ЮПА УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**«Тяп-тяп тума»**

**Тĕллевсем**: П. Эйзин çырнă «Тяп-тяп тума» сăвăпа ĕçлесси; ачасене сăвва итлеме вĕрентесси; евĕрлесе калама вĕрентесси; хусканусем тутарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасене «Тяп-тяп тума» сăвва вуласа парать те сăвăри сăмахсемпе пĕр килекен хусканусене кăтартать. Сăвва тепĕр хут вуланă чух ачасем хусканусем тăваççĕ тата воспитатель хыççăн сăмахсене евĕрлесе калаççĕ.

Тяп-тяп тума
тяппи пур,
Çат-çат тума
алли пур,
Нăш-нăш тума
сăмси пур,
Чăр-чăр пăхма
куçĕ пур.

Воспитатель пĕр-пĕр ачана чĕнсе кăларать те хусканусем кăтартма ыйтать. Воспитатель сăвва каланă май ача кирлĕ хусканусем тăвать.

*2-мĕш вăйă*

**Çӳлелле – аялалла**

**Тĕллевсем**: воспитателе илтме, итлеме, мĕн ыйтнине пурнăçлама хăнăхтарасси; *çӳлелле, аялалла* ăнлавсемпе паллаштарасси, вĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель сĕтелĕ çинче тĕрлĕрен тетте: пысăк тата пĕчĕк упасем, ӳкменкке (неваляшка), матрёшка, хĕрлĕ тата кăвак куркасем, пысăк тата пĕчĕк кубиксем. Воспитатель тетте суйласа илет, унăн пысăкăшне тата тĕсне калама ыйтать. Кайран ачасене пĕчченшерĕн хăйĕн патне чĕнсе илсе тепĕр тĕрлĕ ĕç хушать (чĕннĕ ача ĕçе пурнăçлани ыттисене курăнмалла).

В о с п и т а т е л ь. Аня, пысӑк упана хӗрлӗ куркаран чей ӗҫтер.

Ача йӑнӑшрӗ пулсан упи «хӑрлатать», «ҫаврӑнса ларать», хӑй кӑмӑлсӑррине кӑтартать. Ытти теттесем те ҫаплах тӑваҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Матрёшкӑна пӗчӗк кубик ҫине ларт.
А ч а. Матрёшка, лар.
В о с п и т а т е л ь. Пысӑк упана пысӑк кубик ҫине ларт.
А ч а. Упа, кубик ҫине лар.
В о с п и т а т е л ь. Пӗчӗк упана пӗчӗк кубик ҫине ларт.
А ч а. Упа, кубик ҫине лар.
В о с п и т а т е л ь. Ӳкменккене кӑвак куркаран чей ӗҫтер.
А ч а. Ӳкменкке, чей ӗҫ.

Кайран воспитатель ӗҫе йывӑрлатать. Ачана хӑйӗн патне чӗнсе илсе упа тыттарать: «Упана чей ӗҫтер, ӑна матрёшкӑпа е ӳкменккепе паллаштар, пукан ҫине ларт, ташлаттар» т. ыт. те.
Ача хӑй мӗн тунине сӑмахпа каласа (ӑнлантарса) пырать: «Эпӗ упана кӑвак чашӑкран пыл ҫитертӗм». (Ӗҫе 4–5 хут туса ирттермелле.) Ача воспитателе нимӗн те калаймарӗ пулсан ӑна пулӑшмалла: «Эпир Петӗрпе халӗ ... турӑмӑр».
Воспитатель теттесене пуҫтарать. Кубиксенчен картлашка тӑвать. Ун тӑрӑх пуканене хӑпартать: «Ҫӳлелле, ҫӳлелле, ҫӳлелле! Хӑпарма йывӑр!» – тет. Пуканене антарать: «Аялалла, аялалла, аялалла! Анма ҫӑмӑл!» – тет. Палӑртнӑ сӑмахсене каласа ачасем ӗҫе 4–5 хут пурнӑҫлаҫҫӗ.
***Асӑрхаттарни:*** Ытти кунсенче картлашкапа теттене хӑпартнӑ е антарнӑ чух ачасем ҫакӑн пек сӑмахсем калаҫҫӗ: «Ҫӳлелле, ҫӳлелле, ҫӳлелле – ҫӳлте, аялалла, аялалла, аялалла – аялта (урайӗнче е ҫӗр ҫинче)».

*3-мӗш вӑййӑ*

## Кам мӗн ҫиет?

**Тӗллевсем**: «Ҫарӑк» юмаха аса илтересси; евӗрлесе калаттарасси; чӗр чунсем мӗн ҫинине ҫирӗплетесси; ачасен калаҫӑвне ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсене кӗртесси; [а] сасса тата пысӑк мар сӑмах майлашӑвӗсене тӗрӗс калама вӗрентесси.

В ӑ й ӑ  й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь. Пӗр старик ҫарӑк акрӗ тет. Ҫарӑкӗ ... (*пы-ысӑк*) ӳсе ҫитӗнчӗ тет. Тухрӗ тет старик ҫарӑкне ... (*кӑларма*). Туртать-туртать, ниепле те ... (*туртса кӑлараймасть*). Ҫарӑка кӑларма тата кам килет-ши?

Ачасем сӑнарсене аса илеҫҫӗ, воспитатель ешчӗкрен кирлӗ теттесем кӑларать, ачасене хӑйӗнпе пӗрле юмаха вӗҫлеме сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Шăши тытрĕ ... (*кушакран*). Кушак тытрĕ ... (*анчăкран*) … .

Юмаха вĕçленĕ май воспитатель ачасенчен асаттепе асанне çарăкпа мĕн туни çинчен ыйтать.

А ч а с е м. Киле илсе кайнă.

– Çунă, тасатнă.

– Мухта-мухта: «Ту-у-утлă çарăк! Ту-утлă!» – тесе çисе янă.

В о с п и т а т е л ь. Асаттепе асанне тата вĕсен мăнукĕ тутлă çарăк çиеççĕ. Питĕ-питĕ тутлă çарăк çиеççĕ. Çарăк мĕнле?

А ч а с е м. Çарăк тутлă. (*Ушкăнпа тата темиçе ача пĕчченшерĕн хуравлаççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Анчăк, кушак тата шăши çынсем çине пăхаççĕ, анчах çарăк çимеççĕ. Вĕсене валли мăнукĕ урăхла апат хатĕрленĕ. Кушак валли – сĕт е какай татăкĕ пур: «Сĕт çи, кушакăм! Какай çи!». (*Воспитатель ачасене ушкăнпа е пĕчченшерĕн темиçе хут калаттарать.*) Анчăк валли – шăмă пур: «Анчăк, шăмă кăшла». Шăши валли – чăкăт (сыр) татăкĕ. Шăши çурисене валли – чăкăт! (*Ушкăнпа темиçе хут калаççĕ.*)

Воспитатель ачасенчен чĕр чунсем мĕн çинине тепĕр хут ыйтать: «Асаттепе асанне тата мăнукĕ тутлă çарăк çиеççĕ»; «Кушак сĕт ĕçет тата какай çиет»; «Йытă шăмă кăшлать»; «Шăши чăкăт çиет». Воспитатель анчăкпа кушак çинĕ теттесене тата савăт-сапана пуçтарать. Тухтăр (пукане) кăларать.

Т у х т ă р. Сывлăх сунатăп! Эпĕ Пукане тухтăр. Сирĕн пырсем (карланкăсем) ыратнипе ыратманнине тĕрĕслеме килтĕм. Валентина Ивановна, çăвара уçса а-а-а-а тесе калăр-ха!

В о с п и т а т е л ь. А-а-а-а.

Унтан пуканепе воспитатель кашни ача патне пырса (çăварĕсене уçтарса) «а-а-а-а» тесе калама ыйтаççĕ.

Т у х т ă р. Пурте сывă тата пурте [а] сасса калама пĕлетĕр. Сывă пулăр.

Çак вăййăн иккĕмĕш пайне урăхла ирттерме пулать. Вăййă тĕллевĕ – юмаха аса илесси, юмахпа ӳкерчĕк хушшинчи уйрăмлăхсене тупса палăртасси. Асаттепе асанне çарăкпа мĕн тунине пĕлсессĕн воспитатель ачасене «Асатте çарăк туртать» ӳкерчĕк кăтартать. «Çакăнта пурте тĕрĕс-и?» – тет воспитатель.

В о с п и т а т е л ь. Старикки – çарăкран, карчăкки ... . Карчăкĕ ăçта?

А ч а с е м. Карчăкĕ çук.

В о с п и т а т е л ь. Пăхăр-ха, тата мĕн тĕрĕс мар? (*Ӳкерчĕкре хĕр ача вырăнне арçын ача çарăк туртать, анчăк çук. Кушак хӳринчен вара чĕрĕп çакланнă.*) Çакăн пек кулăшла пăтранчăк ӳкерчĕк. Хĕвел те çарăка туртакан старик, арçын ача, кушак тата чĕрĕп çине пăхса йăл кулать.

*4-мӗш вăйă*

## Теттесем

**Тӗллевсем**: хушнине итлеме, ăнланма, пурнăçлама вӗрентесси; хирӗçле пӗлтерӗшлӗ ăнлавсене уйăрса илме хăнăхтарасси; [и] сасса тӗрӗс калаттарасси.

В ă й ă   й ӗ р к и

Воспитатель сӗтелӗ çинче кубиксенчен тунă картлашка. Чи аялта тата пӗрремӗш картлашки çинче матрӗшкăсем тăраççӗ. Картлашкапа çумăн тӗрлӗ тум тăхăннă пуканесем, пысăк савăт, ал шăлли, грузовик вырнаçтарнă. Пӗр ачана суйласа илсе: «Матрӗшкăна картлашка çинчен анма пулăш», – тет воспитатель.
(Ача мӗн туни ыттисене курăнмалла.)
Ача ӗçе тӗрӗс пурнăçласан воспитатель ăна мухтать. Матрӗшка картлашка çинчен катрлашка çине мӗнле аннине ытти ачасене те алă хусканăвӗпе туса кăтартма ыйтать: «Аялалла, аялалла, аялалла... Аялта!»
Кайран воспитатель иккӗмӗш ачана тепӗр майлă ӗç сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Матрӗшкăна картлашкапа хăпарма пулăш. Çӳлелле, çӳлелле, çӳлелле... Çӳлте! (*Алăпа çӳлелле кармашса кăтартать, ачасем ун хыççăн калаççӗ.*)

В о с п и т а т е л ь. Хӗрлӗ кӗпе тăхăннă пуканен питне шывпа çу.

А ч а *(пуканене шыраса тупать те унăн питне шывпа çуса)*. Шыв, шыв, пуканен питне çу. (*Пуканен питне ал шăллипе шăлать.*)

В о с п и т а т е л ь. Кăвак кӗпе тăхăннă пуканене сăпкана хурса сиктер. Сăпка юрри юрла.

А ч а. Нянине, паппине!

В о с п и т а т е л ь. Картлашка çумӗнче тăракан матрӗшкăна грузовикпа ярăнтар: «Малалла – каялла, малалла – каялла».

А ч а. Малалла – каялла, малалла – каялла. (*Сăмахсене калаççӗ, хушнă ӗçе тăваççӗ.*)

Воспитатель тимлӗ итлемен ачасене хăй патне чӗнет, çак ӗçсене пурнăçлама пулăшать. Воспитатель ачасене пукане кăтартать. Унăн питне çуман иккен, çавăнпа вăл йӗрет: и-и-и. (*2–3 хут ушкăнпа калаççӗ.*)
Воспитатель ачасенчен пукане мӗнле йӗнине ыйтать. Ăна йăпатмалли çинчен калать. Хусканусем туса пуканене йăпатаççӗ.

Пысăк пул, пысăк пул,
Ӳссен маттур ача пул.
Юрлама та ăста пул,
Ташлама та маттур пул!

*5-мĕш вăйă*

## Пӳрт тăрринче çывăракан кушак

**Тĕллевсем**: ачасене калава ӳкерчĕк кăтартмасăр итлеме вĕрентесси; [и], [а] сасăсене тата [иа] сасăсен пĕрлешĕвне тĕрĕс калама хăнăхтарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Хăнара Мăркка кушак. Вăл ачасене калав вуласа парасшăн иккен.

В о с п и т а т е л ь. Атя, Мăркка, эпĕ сана пулăшам, калава иксĕмĕр пĕрле ачасене вуласа парар.

Воспитатель  Л.Н. Толстой çырнă «Пӳрт тăрринче çывăракан кушак» калава вуласа парать.

В о с п и т а т е л ь. Кушак пӳрт тăрринче çывăрнă, тяпписене чăмăртанă. Кушак çывăхне кайăк пырса ларнă. Кайăк, çывăха ан лар, кушаксем чее!

Воспитатель ачасене çывăракан кушака евĕрлесе кăтартма ыйтать.
Мĕншĕн кайăкăн кушак çумне, лешĕ çывăрать пулсан та, çывăх ларма юраманнине çирĕплетсе хăварать.
Воспитатель калава тата икĕ хут вулать. Хăйĕн хыççăн юлашки сыпăкĕсене каласа пыракан ачасене мухтать.

М ă р к к а. Кайăк, çывăха ан лар, эпир, кушаксем, чее.

Мăркка воспитательпе пĕрле ачасене ӳкерчĕксем (тетте) кăтартать: пĕринче лаша ӳкернĕ, тепринче – ашак.
Ачасем час-часах ашака лашапа пăтраштараççĕ, çавăнпа воспитатель вĕсене çапла ăнлантарать: «Ашак лашаран пĕчĕкрех, унăн хăлхисем вăрăм. Вĕсем тĕрлĕрен сас параççĕ. Лаша: «И-ха-ха», ашак вара: «И-а, и-а, и-а».
Воспитатель ачасене ашака евĕрлеме ыйтать. Ачасем: «И-а, и-а», – тесе калаççĕ.

*6-мĕш вăйă*

## Петĕрпе Мишшан лаша пулнă

**Тĕллевсем**: калава ӳкерчĕк кăтартмасăр итлеме, итленине астуса юлма хăнăхтарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Хăнара Мăркка кушак. Мăркка воспитательпе пĕрле ачасене лаша ӳкерчĕкĕ (тетте) кăтартать. Ачасем, лаша пек, и-ха-ха! тесе калаççĕ. Сиккелеççĕ.
Мăркка каллех калав вуласа парасшăн иккен. Воспитатель ачасене Л.Н. Толстой çырнă «Петĕрпе Мишшан лаша пулнă» калава вуласа (е каласа) парать.

В о с п и т а т е л ь. Петĕрпе Мишшан лаша пулнă. Пĕррехинче Петĕрпе Мишша вăрçăнса кайнă. Пĕр-пĕринчен лашана туртса илнĕ.

– Ку ман лаша! Лашана мана пар!

– Çук, сан мар, ман лаша! Лашана мана пар!

Амăшĕ килнĕ те лаша теттене илсе кайнă. Петĕрпе Мишша лашасăр юлнă.

Воспитатель ачасене Петĕрпе Мишша пĕртăвансем пулнине ăнлантарать. Вĕсене тетте лашана амăшĕ илсе панине пĕлтерет.

В о с п и т а т е л ь. Пĕр теттепе иккĕн туслăн выляма пулать-ши? (*Ачасен хуравĕсене итлет, тӳрлетет.*)

Воспитатель калава виçĕ хут вулать.

В о с п и т а т е л ь. Петĕрпе Мишша вăрçăнса кайса тĕрĕс тунă-и? Пĕр-пĕринпе мĕнле вылямалла? (*Ачасен хуравĕсене итлет, тӳрлетет.*)

М ă р к к а. Эпĕ пуринпе те выляма юрататăп. Туслă пурăнатăп. Ачасем, эсир мана пурте ачашласан эпĕ питĕ савăнатăп.

Воспитатель Мăрккана кашнин патне илсе пырса ачашлаттарать, туслă пулмаллине каласа хăварать.

*7-мĕш вăйă*

## Автобуса чĕн

**Тĕллевсем**: [у] сасса тĕрĕс калама хăнăхтарасси; воспитатель ыйтнине ăнланма, калама вĕрентесси.

В ă й ă й ĕ р к и

Хăнара тухтăр (пукане). Вăл ачасен пырĕсене тĕрĕслеме килнĕ иккен. «Çăварсене уçса «а-а-а!» тесе калăр», – тет. (3–4 ача е ушкăнпа хуравлаççĕ.) Унтан воспитатель ачасене çынсем кăмпа е çырла пуçтарма кайсан çухалса каяс мар тесе «ау! ау!» тесе чĕннине калать. (3–4 ача е ушкăнпа темиçе хут калаççĕ.) Воспитатель чăрăшсем лартса тухать. Чăрăшсем хушшинче Улине (пукане) кăмпа пуçтарса çӳрет.

В о с п и т а т е л ь. Улине çухалса ан кайтăрччĕ. Айтăр-ха Улинене «ау-у! ау-у! ау-у!» тесе чĕнетпĕр.

А ч а с е м (*пурте пĕрле те, уйрăмшарăн та чĕнеççĕ Улинене*). Ау-у! ау-у! ау-у!

Воспитатель ачасем сасăсене хытă тата пĕрле каланине сăнаса пырать (а-а-ау-у-у). Унтан вĕсене автобус тетте кăтартать. Вăл мĕнле уланине ăнлантарать. Хытă тата сасса вăрăмлатса ачасене «у-у-у-у!» тесе калама ыйтать.

Воспитатель «Автобуса чӗн» вӑйӑ йӗркелет.
«У-у-у-у!» тесе ачасем автобуса чӗнеҫҫӗ. Ача сасса шӑппӑн е кӗскен каласан автобус «килмест». Ҫавӑнпа воспитатель ачасене сасса хыттӑн тата вӑрӑммӑн калама ыйтать.
Воспитатель ачасене А. Кӑлкан ҫырнӑ «Автобус» сӑвва вуласа парать (1–2 хут).
Ачасене хайӗн хыҫҫӑн «ту-ту-ту, асту» тесе калама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Тӳрӗ, тикӗс ҫулпала
Пӗр автобус вӗҫтерет.
Хайне ирӗк ҫул пама
Таҫтанах вӑл систерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатӑн вӗт, асту!
Ай-хай лаши ӑмӑртса
Ҫул айккипе сиктерет.
Автобусӗ васкаса
Тата хытӑ вӗҫтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Ҫулна лайӑхрах асту.

*8-мӗш вӑйӑ*

## Мечӗке ҫӑлатпӑр

**Тӗллевсем**: ачасене ӳкерчӗке сӑнама, унта мӗн сӑнланине ӑнланма вӗрентесси; воспитатель ыйтӑвӗсене хуравланӑ чух персонажсен хушшинчи ҫыхӑнӑва ӑнланма хӑнӑхтарасси; пуплеве аталантарасси.

В ӑ й ӑ   й ӗ р к и

Воспитатель ачасене «Мечӗке ҫӑлатпӑр» ӳкерчӗке пӑхса тухма сӗнет (сери авторӗ Е. Батурина). Ачасем ӳкерчӗкре мӗн (кама) курнине черетпе калаҫҫӗ: хӗр ача макӑрать, мечӗк шыв кӳлленчӗкне ӳкнӗ, арҫын ача мечӗке илет тата ытти те.

Воспитатель ӳкерчӗк ҫинчен кӗскен каласа парать.

В о с п и т а т е л ь. Таня мӗншӗн макӑрать?

А ч а с е м. Мечӗк шыва путасран хӑрать (*пурте пӗрле е уйрӑмшар хуравлаҫҫӗ*). Таньӑна лӑплантармалла. «Чарӑн, ан йӗрсем, Танюк. Шывра мечӗк путас ҫук».

В о с п и т а т е л ь. Таньӑна мечӗке илме арҫын ача пулӑшать. Мечӗке илме пулӑшакан арҫын ачана кӑтартӑр (*ачасене ӳкерчӗк умне чӗнет*). Вӑл ӑна туратпа тӗксе илет. Халӗ вара арҫын ача мечӗке туратпа мӗнле илни-

не кӑтартӑр. Чечек ҫыххи тытнӑ хӗр ача мӗн тӑвать? Вӑл кукленсе ларнӑ та пӑхать. Мӗнле пӑхнине кӑтартӑр.



*Мечӗке ҫӑлатпӑр*

Воспитатель ачасене Таньӑпа тусӗсем ҫинчен калав итлеме сӗнет.
(Ҫак калав малтанхинчен чылай анлӑрах.)

В о с п и т а т е л ь. Ачасем мечӗкпе вылянӑ. *Ӑна пысӑк шыв кӳлленчӗкне* ӳкернӗ. «Ай-уй!» – хӗр ача *хӑраса шыв кӳлленчӗкӗ умӗнче* кукленсе ларнӑ. «Ӑ-ӑ-ӑ! – макӑрса янӑ Таня. – Мечӗк шыв кӳлленчӗкӗнче путать-ҫке, путать!». «Ан йӗр, ан йӗр, Таня! Эпӗ мечӗке туртса кӑларӑп», – лӑплантарнӑ Таньӑна футболка тӑхӑннӑ арҫын ача. Вӑл *турат* илсе мечӗке *шыв кӳлленчӗкӗ хӗррине* тӗкме пуҫланӑ. Часах ачасем мечӗке *ҫӑлнӑ*. Таньӑн тусӗсем питӗ лайӑх!

Воспитатель калава тепӗр хут вулать. Текстра палӑртнӑ сӑмахсене ачасене хӑйсене сӑмахпа калаттарса пыма тӑрӑшмалла.
Воспитатель ӳкерчӗк умӗнче «Мечӗк» сӑвва вуласа парать.

**Мечӗк**

Макӑрма Танюк пикенчӗ –
Шыва ӳкнӗ пӗчӗк мечӗк.
– Чарӑн, ан йӗрсем, Танюк.
Шывра мечӗк путас ҫук.
*А. Барто, П. Ялкир* куҫарнӑ

# ЧӐ̆К УЙӐХӖНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВӖРЕНТӐ̆ЛЛӖ ВӐЙӐСЕМ

*1-мӗш вӑйӑ*

**Мӗн килчӗ? Мӗн кайрӗ?**

**Тӗллевсем**: ачасене тӗрлӗ майпа калаҫӑва явӑҫтарасси; йӑпатмӑш сӑвӑри кайӑксен ячӗсене калама тата кайӑксене пӗр-пӗринчен уйӑрма хӑнӑхтарасси, евӗрлесе калама вӗрентесси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Воспитатель фланелеграф ҫине ӳкерчӗксем ҫыпӑҫтарать.

В о с п и т а т е л ь (*ӳкерчӗк кӑтартса*). Хӗвел тухрӗ, кӑвакалсем вӑранчӗҫ. Вӑранчӗҫ те нартлатма пуҫларӗҫ: нарт-нарт-нарт! Кӑвакалсем мӗнле нартлатаҫҫӗ?

А ч а с е м (*ушкӑнпа е пӗчченшерӗн хуравлаҫҫӗ*). Нарт-нарт-нарт!

Воспитатель сӑмах майлашӑвӗсене тепӗр хут калать, ачасене сӑмахсене вӗҫне ҫитиччен калама хистет: «*Хӗвел* тухрӗ, *кӑвакалсем* вӑранчӗҫ, вӑранчӗҫ те *нартлатма* пуҫларӗҫ».

В о с п и т а т е л ь (*ӳкерчӗк кӑтартса*). Хурсем те вӑранчӗҫ. Вӗсем кӳлӗ хӗррине утрӗҫ. Утаҫҫӗ, какалаҫҫӗ: ка-как! ка-как! Хурсем мӗнле какалаҫҫӗ? Вӗсем ӑҫта каяҫҫӗ?

В о с п и т а т е л ь (*ӳкерчӗк кӑтартса*). Хӗвел тухрӗ, кӑркка вӑранчӗ. Акӑ мӗнле хитре кӑркка: хӑй пысӑк, сӑмси хӗрлӗ. Картиш тӑрӑх хӑйне хӑй калаҫса утать: «Пӗлт-пӗлт-пӗлт! пӗлт-пӗлт-пӗлт!». Кӑркка мӗнле калаҫать?

В о с п и т а т е л ь (*ӳкерчӗк кӑтартса*). Чӑх вӑранчӗ. «Кӑт-кӑтик, кӑт-кӑтик, – кӑтиклет чӑх. – Акӑ эпир те кунта, кӑт-кӑтик». Мӗн вӑранчӗ? Эсир чӑх вӑраннине ӑҫтан пӗлтӗр?

Кайран воспитатель ачасене автан кӑтартать. Автан мӗнле авӑтать? Воспитатель 1–2 хут В. Давыдов-Анатри ҫырнӑ «Нарт-нарт кӑвакал» сӑввӑн 1–2 ҫаврине вуласа парать. Хӑй хыҫҫӑн калама тӑрӑшакан ачасене мухтать.

Нарт-нарт кӑвакал
Кӳлӗ тавра ҫаврӑнать,
Ик ҫунатне шарт! ҫапать.
Нарт-нарт кӑвакал
Шыва чӑмать, ҫухалать,
Лӑпкӑ шыва хумхатать.

Воспитатель «Мĕн килчĕ? Мĕн кайрĕ?» вăйă ирттерет.

В о с п и т а т е л ь. Хĕвел тухсан хĕр ача картишне тухрĕ. Акă вăл. (*Ӳкерчĕк кăтартать.*) Хĕр ача чăх-чĕппе хур-кăвакала апат пама тухнă. Малтан ун патне ... (*кăвакалсем*) пычĕç. Вĕсем хыççăн ... (*хурсем*) пычĕç, кайран... (*кăркка*) çитрĕ, (*чăхсем*) ... чупрĕç. Апат çисе тăрансан пурте унталла-кунталла саланчĕç. Малтан мĕн кайрĕ? Куçăрсене хупăр. (*Ачасем куçĕсене хупаççĕ. Воспитатель пĕр ӳкерчĕкне илет.*) Куçăрсене уçăр. Мĕн кайнă? (*Кăркка.*) Куçăрсене хупăр. Халĕ вара уçăр. Мĕн çук? (*Хурсем çук.*) Тепĕр хут куçăрсене хупăр. Уçăр. Халĕ мĕн куратăр? (*Чăхсем кайнă, автан килнĕ.*)

*2-мĕш вăйă*

## Çил

**Тĕллевсем**: ачасене тĕссене уйăрма, *хĕрлĕ, симĕс, сарă* тĕс ячĕсене калама вĕрентесси; калаçу, итлев хăнăхăвĕсене аталантарасси; тупмалли юмах тупсăмне тупма хавхалантарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь (*хĕрлĕ, симĕс, сарă çулçăсем кăтартса*). Ачасем, ку мĕн? Çулçă мĕн тĕслĕ? Çулçăсем хăçан вĕлкĕшеççĕ?

А ч а с е м. Çил вĕрсен.

В о с п и т а т е л ь. Эпир паян пурте çил ачисем пулса пăхăпăр. Ку (*султанчик е вертушка кăтартса*) йывăç, кусем – çулçăсем. Эпĕ çил ачи. Акă çулçăсем çине вĕретĕп. (*Вĕрет.*) Çулçăсем вĕлкĕшеççĕ. Камăн çил ачи пулас килет?

Воспитатель ачасене хăйсене çулçăсем çине вĕрсе пăхма сĕнет. Кашни ачана йывăçĕ çинчи çулçăсем мĕнле вĕлкĕшнине сăнама тата итлеме сĕнет. Хăй çак вăхăтра сывлăша вăрăммăн (çеккунтран нумайрах), ерипен, хулпуççине хăпартмасăр, сывлăша тепре çавăрса илмесĕр вĕрсе кăларма вĕрентет. Сывлăша тĕрĕс мар вĕрсе кăларакан ачасене сăнать, вĕсемпе кайран уйрăммăн ĕçлет.
Ачасем пурте çулçăсем çине вĕреççĕ. Канаççĕ те татах вĕреççĕ. Кайран воспитатель вертушкăсене пуçтарса илет.

В о с п и т а т е л ь. Эпĕ сире тупмалли юмах калатăп. Эсир унăн тупсăмне тупăр. Тимлĕ итлĕр. Хуравлама ан васкăр, лайăх шутлăр.

Вăл урамра пурăнать, кĕркунне çитсен çулçăсене ӳкерет, хĕлле юр вĕçтерет, çулла пирĕн кепкăсене пуç çинчен ӳкерет. Мĕн вăл?

А ч а с е м. Çил!

Воспитатель çил çинчен сăвă итлеме сĕнет.

Чупса тухрӑм урама,
Çулçӑ тӑкӑнать унта.
Пур сарри, пур симӗсси,
Кӗренни тата хӗрли.
Тӑкӑнать те тӑкӑнать,
Вӗçсӗр-хӗрсӗр çаврӑнать.
Ма тесессӗн çил ачи
Шухӑ вӗçрӗ çав тери.

В о с п и т а т е л ь. Çулçӑсем мӗн тӗслӗ?

А ч а с е м. Сарӑ, симӗс, хӗрлӗ.

В о с п и т а т е л ь. Çулçӑ мӗншӗн тӑкӑнать?

А ч а с е м. Çил вӗрнипе.

В о с п и т а т е л ь. Çил ачи çав тери шухӑ вӗçет. Çулçӑсем тӑкӑнаççӗ. Эпир те çил ачисем пек вӗçсе пӑхатпӑр.

**«Эпир çил ачисем»** хускануллӑ вӑййӑ. (Урама тухсан вӑййа малалла тӑсма пулать.)

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сӑнаса пӑхар-ха, çулçӑсем вӗлкӗшеççӗ-и, пирӗн йывӑççем (султанчик е вертушка) силленеççӗ-и? Çулçӑсем мӗншӗн вӗлкӗшеççӗ?

А ч а с е м. Çил вӗрнипе.

В о с п и т а т е л ь (*ачасене хӳтлӗхе илсе каять*). Кунта пирӗн йывӑççен çулçисем вӗлкӗшеççӗ-и? Мӗншӗн вӗлкӗшмеççӗ?

А ч а с е м. Кунта çил вӗрмест.

*3-мӗш вӑййӑ*

## Çакна эпӗ шухӑшласа тупрӑм

**Тӗллевсем**: хушнӑ ӗçе тума, мӗн тунине сӑмахпа калама хӑнӑхтарасси; сывлӑх сунмалли сӑмахсемпе паллаштарасси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Ачасен умӗнче 6–8 тетте (воспитатель суйласа илнисем). Тӗслӗхрен, пысӑк мар пукане, чашӑк, упа çури, хӑю, мечӗк, мулкач çури, купӑс, тура.
Воспитатель ачасене теттесен ячӗсене каласа тухма ыйтать. Вӗсемпе тӗрлӗрен ӗç туса ирттерме пулни çинчен ӑнлантарать.

В о с п и т а т е л ь. Эпӗ сӗтел çинчен упа çури тата хӑю илтӗм. «Упа çури, эпӗ сана хӑю парнелетӗп», – тесе калатӑп. Эсир те теттесем илӗр те вӗсем мӗн тума пултарни çинчен шухӑшлӑр, сӑмахпа калӑр.

Ачасем пӗрер тетте тата япала суйласа илеççӗ. Теттене япала мӗн тума кирлине калаççӗ: «Мулкач çури купӑс калать», «Пукане çӳçне турать», «Упа çури мечӗк

илнĕ», «Упа çури апатланма хатĕрленет» тата ытти те. Кайран воспитатель теттесене пуçтарса илет. Ачасем патне хăнана Мăркка кушак килет.

В о с п и т а т е л ь. Мăркка кушака сывлăх сунатпăр. «Салам, Мăркка кушак!» – тесе калăр.

А ч а с е м. Салам, Мăркка кушак.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, Мăркка кушакран вăл мĕн çинине, ăçта кайнине ыйтса пĕлер-ха.

Воспитатель ачасене Мăркка кушак ăçта кайнине ыйтса пĕлме хушать, йăпатмалли-илĕртмелли такмак калать.

А ч а с е м. Мăркка кушак, эсĕ мĕн çиетĕн? Мăркка кушак, эсĕ ăçта каятăн?

В о с п и т а т е л ь. – Кушакăм, кушакăм,
Ăçта каятăн, кушакăм?
– Кукамай патне каятăп
Çуллă пăтă çимешкĕн.

В о с п и т а т е л ь. Кушак ăçта каять? Кушак кукамай патне мĕн тума каять?

А ч а с е м. Çуллă пăтă çимешкĕн.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир ăçта кайнине пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлер-и?

– Павăл, Павăл,
Ăçта каятăн, Павăл?

П а в ă л. Кукамай патне каятăп.

В о с п и т а т е л ь. Кукамай патĕнче мĕн тăватăн?

П а в ă л. Çуллă пăтă çиетĕп.

Воспитатель «кушак» сăмах выранне ачасен ячĕсене калать.
Хуравне ачасен хăйсен шутласа кăларса каламалла. Калаймасан воспитатель пулăшать.
Воспитатель ачасен ячĕсене асăнса такмака 3–4 хут та калать. Вăййа вĕçленĕ май кушак çурине мухтама, апатлантарма тата унпа выляма сĕнет.

*4-мĕш вăйă*

## Туслă выляр-и?

**Тĕллевсем**: ачасене *хĕрлĕ, кăвак, сарă* тĕс ячĕсене калама тата уйăрма вĕрентесси; воспитатель хушăвĕсене тума, унăн калаçăвне ăнланма хăнăхтарасси.

В а й ă   й ĕ р к и

Ачасем сĕтел хушшинче лараççĕ. Кашни ача умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ кубиксем тата кирпĕчсем.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сĕтел çинче мĕн-мĕн выртать?
А ч а с е м. Кубиксем, кирпĕчсем.
В о с п и т а т е л ь. Кубиксем мĕн тĕслĕ?
А ч а с е м. Хĕрлĕ (сарă, симĕс).
В о с п и т а т е л ь. Кубиксем мĕн чухлĕ?
А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасене килĕшекен пĕрер япалине илме хушать. Кайран вăл мĕн тĕслине калама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Манăн кубик хĕрлĕ.

Ачасем хăйсем илнĕ япаласем çинчен калаççĕ те вĕсене вырăнне хураççĕ. Воспитатель ачасене пĕрер кирпĕч илтерсе унăн тĕсне калаттарать. Теттесене пĕр-пĕринпе улăштарма ыйтать. Кама мĕн тĕсли лекнине калама сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Таня, санăн мĕн тĕслĕ кирпĕч? Кирпĕче кампа улăштартăн?
Т а н я. Манăн кăвак кирпĕч. Петĕрпе улăштартăм.
В о с п и т а т е л ь. Халĕ санăн мĕн тĕслĕ кирпĕч?
Т а н я. Хĕрлĕ.

Калаçакан ачасене «*Петĕрпе улăштартăм, халĕ манăн алăра хĕрлĕ кирпĕч*» тесе калаттармалла.
Воспитатель пĕрер кубик илме сĕнет. Камăн мĕн тĕслĕ кубик пулнине çирĕплетсе хăварать.
Малалла ачасем кăткăсрах ĕç тăваççĕ: арçын ачасем хăйсен кирпĕчĕсене хĕр ачасене параççĕ, лешсем вĕсене кубиксем тыттараççĕ (çак ĕç çăмăлрах иртсĕр тесен воспитателĕн малтанах хĕр ачасем умне арçын ачасене лартмалла).
Хĕр ачасем кирпĕчсенчен çул тăваççĕ, арçын ачасем вара пĕр сĕтел вĕçĕнчен теприн патне çитиччен хăйсен машинисемпе (кубиксемпе) çул тăрăх «çӳреççĕ».

В о с п и т а т е л ь.

Тӳрĕ, тикĕс çулпала
Пĕр автобус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
Таçтанах вăл систерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

*5-мӗш вӑййӑ*

## Сывӑ-и?

**Тӗллевсем**: ачасене пӗр-пӗринпе хутшӑнма, сывлӑх сунма вӗрентесси, пуплев пуҫарма хавхалантарасси.

В ӑ й ӑ  й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь. Паян пирӗн пата хӑнана Ева ятлӑ пукане килчӗ. Вӑл пире пӗр-пӗрне сывлӑх сунма вӗрентесшӗн. Ева, салам. Сывӑ-и?

Е в а. Сывӑ-и, Вера Ивановна. Салам, ачасем.

Воспитатель ачасене «Ева садике каять» калавпа паллаштарать. Сывлӑх сунмалли сӑмахсене калаттарать.

### Ева садике каять

Ева виҫӗ ҫулта. Ӑна паян ача садне ӑсатаҫҫӗ. Ашшӗ – сулахай аллинчен, амӑшӗ сылтӑмминчен ҫавӑтнӑ.

Ача сачӗн алӑкӗ ҫине пысӑк хӑлхаллӑ Чебурашка ӳкерсе хунӑ.

Ева Чебурашкӑна сывлӑх сунать:

– Сывӑ-и, Чебурашка?

Картишӗнчи пӗчӗк кӑна калитке тӑрринче сап-сарӑ шӑвӑҫ автан ларать. «Килӗрех!» – тесе кӑшкӑрать.

– Сывӑ-и, автан тус? – тет Ева.

– Сывӑ-и, Ева? – тет автан тус.

Воспитатель Евӑна пӳлӗме (группӑна) илсе кӗрет. Евӑн куҫӗнче куҫҫуль. Евӑн амӑшӗ те хурланать.

Пӗчӗк Ева амӑшне лӑплантарать:

– Анне, ан макӑр, эпӗ каҫхине килех пыратӑп.

Хӗр ача амӑшне алӑкран, кайран кантӑкран алӑ сулса ӑсатса ярать.

Амӑшӗ те алӑ сулать:

– Хӗрӗм, ан макӑр. Эпир каҫхине сана килсе илетпӗр.

*А. Ыхра ҫырнинчен*

В о с п и т а т е л ь. Ева Чебурашкӑна сывлӑх суннӑ-и? Вӑл мӗн тесе каланӑ? Чебурашка мӗн хуравланӑ? Ева автан туса сывлӑх сунса мӗн каланӑ? Автан тус мӗн каланӑ? Аня, Евӑна сывлӑх сун-ха. «Сывӑ-и, Ева?»– тесе кала.

А н я. Сывӑ-и, Ева?

Е в а. Эпӗ сывах, Аня. Эсӗ сывӑ-и?

Воспитатель пӗр-пӗрне сывлӑх сунма хавхалантарать. Ачасем хушшинче диалог йӗркелет.

*6-мĕш вăййă*

## Ырă каç пултăр, аннеçĕм

**Тĕллевсем**: ачасен пуплевне ырă каç сунмалли сăмахсем кĕртесси; ашшĕ-амăшĕпе ăшă кăмăллă пулма, пĕр-пĕрне ырă каç сунма хăнăхтарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Ачасен умĕнче мулкач тата упа теттесем.
Воспитатель ачасене ирхине чĕр чунсем ашшĕ-амăшĕсемпе мĕнле хитре сăмахсем каласа сывпуллашма вĕреннине аса илтерет.

В о с п и т а т е л ь. Паян чĕр чунсем хăйсен амăшĕсене ĕçрен мĕнле кĕтсе илмеллине вĕренме килчĕç. Куратăр-и, алăка мулкач çурин амăшĕ уçрĕ. Мулкач çури амăшне мĕн калать-ши? Эсир мĕнле шутлатăр? (*Ачасен хуравĕсем.*) Пĕлеймерĕр. «Ырă каç пултăр, аннеçĕм! – тет мулкач çури. Кайран хушса: – Эсĕ паян питĕ хитре. Эпĕ сансăр тунсăхларăм», – тет. Мулкач çурин амăшĕ çакăн пек лайăх сăмахсене илтсен савăнать, йăл кулать.

В о с п и т а т е л ь. Тепре пăхса илер-ха. Мулкач çурин амăшĕ çитет. «Манăн анне килчĕ, манăн анне килчĕ!» – савăнать мулкач çури.

Вăл хăраса калать: «Ай-уй-уй, мĕн каламаллаччĕ-ши манăн юратнă аннене? Пулăшăр тархасшăн».

А ч а с е м. «Ырă каç пултăр! Эсĕ питĕ хитре!» – тесе каламалла. (*Ушкăнпа тата уйрăмшарăн хуравлаççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, упа çурин амăшĕ килчĕ. Упа çурин мĕн каламаллине аса илтерĕр-ха.

В о с п и т а т е л ь. Эсир паян хăвăр аннĕрсем, аçăрсем сире илме килсен мĕн калатăр? Ан манăр, сирĕн сăмахсем хыççăн аннĕрсен йăл кулмалла, эсир вĕсене ыталаса чуптăвăр.

Вăййа вĕçленĕ май воспитатель «Анне» сăвва вуласа парать.

Манăн анне чи хитри,
Çĕр çинче чи илемли.
Юрататăп эп ăна,
Хамăн çывăх тусăма.
Манăн атте чи вăйли,
Çĕр çинче чи çирĕппи.
Юрататăп эп ăна,
Хамăн çывăх тусăма.

*Елена Ярхуткина*

***Асăрхаттару:*** Каçхине ашшĕ-амăшĕ ачасене садикрен илсе кайма пуçласан вĕсем хумханма (пăлханма) пуçлаççĕ: «Ăçта-ши манăн анне? Хăçан

килет-ши?» Хăш-пĕр чух ача амăшне курсан лăпланать, выляма чупать. Ун пек чухне ачана киле илсе тухса кайиччен нумай вăхăт иртет. Амăшне курсан ача кутăнлашса темĕн ыйтни те пулать. Ку вăл ывăннипе пулать. Çак вăйă ачасене ашшĕ-амăшĕпе хутшăнма вĕрентет.

*7-мĕш вăйă*

**Таньăпа кăвакарчăнсем**

**Тĕллевсем**: ӳкерчĕке сăнама, унта мĕн сăнланине ăнланма вĕрентесси; сăмахсене тата кĕске сăмах майлашăвĕсене каласа пĕтерме хăнăхтарасси.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене «Таньăпа кăвакарчăнсем» ӳкерчĕке кăтартать. Ăна сăнама тата пĕр-пĕринпе хăйсен шухăшĕсене сӳтсе явма вăхăт парать. Кайран ӳкерчĕк содержанине кĕскен каласа парать.



*Таньăпа кăвакарчăн*

В о с п и т а т е л ь. Таня уçăлма тухнă. Хăйĕнпе пĕрле кăвакарчăнсем валли çăкăр тата тырă пĕрчисем илнĕ. Уçăлса çӳренĕ вăхăтра хĕр ача çулçăсенчен хитре çыхă пуçтарнă.

В о с п и т а т е л ь. Урамра мĕнле çанталăк? Таня çинче ăшă япаласем пур-и? Таня мĕн тăхăннă?

А ч а с е м. Таня ăшă пушмак, йĕм тата кофта тăхăннă.

В о с п и т а т е л ь. Кăвакарчăнсем Таня патне хăйсемех вĕçсе килнĕ-и е Таня вĕсене чĕннĕ? Мĕнле чĕннĕ?

А ч а с е м. Куль-куль-куль. (*Пурте пĕрле е 3–4 ача хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Таня кăвакарчăнсене мĕн тума чĕннĕ?

В о с п и т а т е л ь. Таньăн витринчи çулçăсем ăçтан тупăннă? Çыхă хитре-и?

Воспитатель ачасене ӳкерчĕк тăрăх тепĕр хут калав вуласа парать.

Кĕркунне çитрĕ. *Сивĕтрĕ.* Таня ăшă пушмак, йĕм тата кофта тăхăнчĕ. Хĕр ача *çулçăсенчен* тата *кĕрхи чечексенчен* çыхă турĕ. Чечек çыххине витре ăшне хурас терĕ те, унта *çăкăр тĕпренчĕкĕсене курчĕ.* Вĕсене Таня *кăвакарчăнсем валли илсе килнĕччĕ-çке. «Куль-куль-куль, килĕр, апат çийĕр!»* – чĕнет Таня вĕçсе килекен кăвакарчăнсене апат çитернĕ май.

Воспитатель калава тепĕр хут вулать. Ачасем палăртнă сăмахсене воспитатель хыççăн каласа пыраççĕ.

*8-мĕш вăйă*

## Çӳлте – аялта, аякра – çывăхра

**Тĕллевсем**: хушнине итлеме, ăнланма, пурнăçлама вĕрентесси, *çӳлте – аялта, аякра – çывăхра* хирĕçле пĕлтерĕшлĕ ăнлавсене уйăрса илме хăнăхтарасси.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель сĕтелĕ çинче кубиксенчен тунă картлашка выртать. Чи çӳлти картлашка çинче мулкач ларать. Картлашка çывăхĕнче Мăркка кушак, аяккарах (шкапри çӳлĕк çинче) – ӳкменкке пур.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, мулкач картлашка çине хăпарса кайнă та анаймасть. Дима, мулкача картлашка çинчен анма пулăш тархасшăн.

Воспитатель мулкач картлашка çинчен картлашка çине мĕнле аннине хусканусемпе кăтартма ыйтать: «Аялалла, аялалла, аялалла... Аялта!». Кайран воспитатель тепĕр ачана ĕç сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Мулкачăн татах картлашка çине хăпарас килет. Таня, мулкача картлашка тăрăх хăпарма пулăш. (*Воспитатель сăмахпа калама тата хусканупа кăтартма ыйтать.*) «Çӳлелле, çӳлелле, çӳлелле... Çӳлте!».

Ачасем темиçе хут «аялта» «çӳлте» сăмахсене каласа хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, картлашка çывăхĕнче мĕн пур?

А ч а с е м. Мăркка кушак пур.

В о с п и т а т е л ь (*аллине ӳкменкке çине сĕлтсе*). Аякран-аякран пирĕн çине кам пăхать?

А ч а с е м. Ӳкменкке.

В о с п и т а т е л ь. Мăркка – çывăхра, ӳкменкке – аякра.

Воспитатель ачасене сăвă каласа парать (алă хусканăвĕсемпе кăтартать).

Çӳлте – мачча (*аллине çӳлелле çĕклет*),<br>
Аялта – урай *(аллине аялалла антарать),*<br>
Çывăхра – сĕтел (*алăпа хăй еннелле кăтартать*),<br>
Аякра – стена *(алăпа малалла сĕлтет).*

Сăвва темиçе хут калаççĕ. Воспитатель ачасене Мăркка кушак аякка хăнана кайма тухни çинчен пĕлтерет, ăна хăйсем пĕлекен йăпатмалли-илĕртмелли такмакпа ăсатма ыйтать:

– Кушакăм, кушакăм,<br>
Ăçта каян, кушакăм?<br>
– Кукамай патне каятăп<br>
Çуллă пăтă çимешкĕн.

# РАШТАВ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**[М], [мь], [п], [пь], [б], [бь] сасăсем**

**Тĕллевсем**: [м] – [мь], [п] – [пь], [б] – [бь] сасăсене тĕрĕс калама хăнăхтарасси; пĕр пек янăракан сасăсене уйăрма вĕрентесси; ачасен тимлĕхне аталантарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасен умне картинкăсем е вылямалли теттесем кăларса хурать: ĕне (пăру), качака, кушак (кушак çури), шăши (шăши çурисем), така.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сĕтел çинче мĕнле чĕр чунсене куратăр? (*Ачасен хуравĕсем.*) Ку чĕр чунсем пирĕн пата мĕн сăлтавпа килнĕ-ши? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь. Ку чĕр чунсене пулăшу кирлĕ. Мĕнле пулăшу кирлине тимлĕ итлĕр. Пĕррехинче вăйлă çумăр çунă. Çиçĕм çиçнĕ, аслати кĕмсĕртетнĕ, çак чĕр чунсем килĕсенчен питĕ инçетре пулнă. Вĕсем аслатирен ниçта та пытанайман. Чĕр чунсем хытă хăранипе хăйсем мĕнле сас панине те манса кайнă.

Ачасем, чĕр чунсене хăйсем мĕнле сас панине аса илтеретпĕр-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Чи малтан ĕнене (пăрăва) пулăшатпăр: «Ĕне, пире макăрса кăтарт: му-у-у-у, му-у-у-у!».

А ч а с е м (*пурте пĕрле е 2–3 ача уйрăм калать*). Му-у-у-у! му-у-у-у!

В о с п и т а т е л ь. Му-у-у-у! тет ĕне. Ĕне мĕнле сас памаллине аса илчĕ. Ĕне сире тав тăвать, сире каçхи апата сĕт илсе килсе парать. Ĕне сĕчĕ питĕ усăллă!

В о с п и т а т е л ь. Халĕ вара кушака пулăшăпăр. Кушак мĕнле мăрлатать?

А ч а с е м. Мăр-мăр-мăр.

Малалла воспитательпе ачасем пурте пĕрле е уйрăммăн калаççĕ: «Качака мекеклет: ме-е! ме-е!»; «Шăшисем сас параççĕ: пи-пи-пи!»; «Така сас парать: «ме-е-е! ме-е-е!».

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чĕр чунсем хăйсем сас панине аса илчĕç, халĕ вĕсене киле çитме пулăшăпăр. Акă машинăсем вĕсене илме килеççĕ. Машинăсем мĕнле сас кăлараççĕ?

Пирĕн тĕрлĕ машинсем,
Би-би-би, би-би-би!
Саррисем те хĕрлисем,
Би-би-би, би-би-би!
Машин хыççăн машинсем,
Би-би-би, би-би-би!
Кускалаç урарисем,
Би-би-би, би-би-би!

Воспитатель иккĕмĕш хут вуланă чухне ачасене «би-би-би, би-би-би» тесе ушкăнпа калаттарать.

*2-мĕш вăййă*

### Хăшĕ тĕрĕс каларĕ?

**Тĕллевсем**: [к], [н] сасăсене тĕрĕс калама вĕрентесси; евĕрлесе калама хăнăхтарасси; воспитатель ыйтăвĕсене тимлесе хуравласси.

Вăйă йĕрки

Фланелеграф çине Ева ятлă хĕр ача, Атнер ятлă арçын ача, кăвакал, автан, сысна, хур ўкерчĕкĕсем çыпăçтарса хунă.
Воспитатель ачасене калава тимлĕ итлеме сĕнет.

### Хăшĕ тĕрĕс каларĕ?

Манăн пурă пур. Урамра хапха çине пўрт ўкертĕм. Пўртĕн мăрйине турăм. Мăрьерен тĕтĕм тухать. Карта çумĕнче йывăç ларать. Йывăç çывăхĕнче шыв юхать. Шывра пулă ишет.

Сысна пычĕ:
– Нăрх-нăрх, – терĕ.
Кăвакал пычĕ:
– Нарт-нарт, – терĕ.
Хур пычĕ:
– Ка-ка-ка-как, – терĕ.
Автан пычĕ:
– Ку-ку-ру-ук, – терĕ.
Атнер пычĕ:
– Маттур, – терĕ.
Ева пычĕ:
– Хўме çине ўкермеççĕ, – терĕ.
Тахăшĕ тĕрĕс каларĕ?..

*А. Ыхра*

Воспитатель калава тепре вулать, вуланӑ май ӳкерсе пырать. Ачасене фланелеграф умне чӗнет, рольпе калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Хӑшӗ тӗрӗс каларӗ? Сире камӑн сасси килӗшрӗ?
А ч а. Хур сасси.
В о с п и т а т е л ь. Хур мӗнле какалать?
А ч а. Ка-ка-ка.
В о с п и т а т е л ь. Таня, кӑвакал мӗнле нартлатать?
Т а н я. Нарт-нарт.
В о с п и т а т е л ь. Сысна мӗнле нӑриклетет (ҫухӑрать)?
А ч а с е м. Нӑрх-нӑрх.
В о с п и т а т е л ь. Автан мӗн тесе каларӗ?
А ч а с е м. Ку-ку-ру-ук!
В о с п и т а т е л ь. Атнер мӗн каларӗ? Ева мӗн калать?

Воспитатель ачасене пӗчченшерӗн тата ушкӑнпа темиҫе хут еврӗлесе калаттарать.

*3-мӗш вӑйӑ*

## Чӑмӑрккасем кустаратпӑр

**Тӗллевсем:** ачасене *хӗрлӗ, сарӑ, симӗс* тӗссемпе малалла ӗҫлеттересси; сюжетлӑ картинӑна тишкерме вӗрентесси; ачасен пуплевне ӗҫе пӗлтерекен сӑмахсем кӗртесси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Воспитатель ачасене «Чӑмӑрккасем кустаратпӑр» картина кӑтартать (авторӗ Е. Батурин). Ачасем картинӑна пӑхаҫҫӗ те ыйтусене хуравлаҫҫӗ.



*Чӑмӑрккасем кустаратпӑр*

В о с п и т а т е л ь. Арҫын ачасем мӗн тӑваҫҫӗ?

А ч а с е м. Выляççĕ.

– Чăмăрккасем кустараççĕ.

– Чăмăрккасене хапхана кустарса кĕртеççĕ. (*Ушкăнпа е пĕчченшерĕн хуравлаççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Арçын ачасен миçе чăмăркка?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Чăмăрккасем ăçта выртаççĕ?

А ч а с е м. Ешчĕкре.

В о с п и т а т е л ь. Сарă кĕпе тăхăннă арçын ача мĕн тĕслĕ чăмăркка тытнă?

А ч а с е м. Хĕрлĕ чăмăркка тытнă.

В о с п и т а т е л ь. Чăмăрккана тытма хатĕрленнĕ ача мĕн тăхăннă?

А ч а с е м. Кăвак шортă, йăрăм-йăрăм кĕпе.

В о с п и т а т е л ь. Чăмăркка тытма хатĕрленнĕ ача аллине мĕнле тытнă? Кăтартăр-ха.

В о с п и т а т е л ь. «Чăмăрккана хăвăртрах кустар», – тесе калать юлташне кăвак шортă тăхăннă арçын ача. Юлташĕ мĕн калать?

А ч а с е м (*ушкăнпа е пĕчченшерĕн*). «Тыт!» – тет вăл.

В о с п и т а т е л ь. Чăмăрккана мĕн тĕслĕ хапхаран кĕртсе ямалла?

А ч а с е м. Сарă хапхаран.

Воспитатель пĕтĕмлетӳ тăвать: «Арçын ачасем чăмăрккасем кустарма шутланă. Хире-хирĕç ларнă та варрине сарă хапха тăратса хунă. Симĕс шортă тăхăннă арçын ача чăмăрккана хапха витĕр кустарасшăн. «Тыт! Тимлĕрех пул!» – тет. Кăвак шортă, йăрăм-йăрăм кĕпе тăхăннă арçын ача пĕшкĕнсе ларнă та чăмăрккана тытма хатĕрленет.

В о с п и т а т е л ь. Эсир çак арçын ачасем пек вылясшăн-и? Атьăр выляр!

Воспитатель сĕтел çине, картина çинчи пек, хапха лартать, икĕ ачана чĕнсе кăларать. Ачасем тата вĕсен хусканăвĕсем ыттисене лайăх курăнмалла. Воспитатель пĕр ачине чăмăркка парать те унăн тĕсне калама ыйтать (е хăйне суйлаттарса тĕсне калама хушать). Аслăрах ачасене виçĕ тĕслĕ чăмăркка пама юрать, кĕçĕннисене – икĕ тĕслĕ.

1 - м ĕ ш  а ч а. Ман пата чăмăрккана кустар.

2 - м ĕ ш  а ч а (*чăмăрккана кустарса ярса*). Тыт!

Вылянă май ачасене калаçма хистемелле.
Воспитатель сĕтел çине тата темиçе хапха лартса хурать те пур ачана та вăййа хутшăнтарать.

*4-мĕш вăйă*

**Аякра – çывăхра**

**Тĕллевсем**: [ф] сасса тĕрĕс калама вĕрентесси; *аякра, çывăхра* сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарасси, ку сăмахсемпе калаçура тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасене пĕчĕк йытă çури тетте кăтартать, ăна Фунтик тесе чĕнет. Фунтик мĕнле вĕрнине итлеме сĕнет. Воспитатель ăнлантарать: аф! тесе калама çăвара кармалла. Ачасем малтан пурте пĕрле, унтан уйрăмшарăн аф! аф! тесе калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Йытă çури сĕтел çинче выртакан калпак çине пырса выртасшăн. Ачасем, йытă çурин калпак çине выртма юрать-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) (*Воспитатель йытă çурине пӳрнипе юнать те хытăрах саспа калать.*) Фу-у, Фунтик, фу-у! Ачасем, пурте пĕрле «фу-у, Фунтик, фу-у!» тесе калатпăр. (*4–5 ачана уйрăмшарăн калаттарать.*)

Воспитатель калпака илсе хурать те ачасене пысăк йытă кăтартать. Вăл ачасене пысăк йытă хыттăн вĕрет, пĕчĕк йытă шăппăнрах вĕрет тесе ăнлантарать. Унтан воспитатель ачасенчен пысăк йытă тата пĕчĕк Фунтик мĕнле вĕрнине ыйтать. Ачасем пурте пĕрле тата уйрăмшарăн хуравлаççĕ. Воспитатель ачасене сасăсен пĕрлешĕвне тĕрĕс, тĕрлĕ сасă вăйĕпе хуравлама хистет.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăхăр-ха, пирĕн йытă тем курнă. (*Инçех мар тăракан кушак, кăвакал е урăх тетте çине кăтартать.*) Кушак çине хытă вĕрмелле мар, ăна хăратмалла мар! Фу, фу, вĕрме юрамасть!

В о с п и т а т е л ь (*сĕтел çине кăвакал кăларса тăратса*). Ку кăвакал, ăна Филя тесе чĕнеççĕ. Вăл сирĕнпе паллашасшăн. Ачасем, вырăнтан тăмасăр, алăсене тăсса кăвакала ачашлăр. Тенкелсем çинчен ан тăрăр. Ун патне тăсăлса çитме пулать-и? Мĕншĕн? (*Ачасен хуравĕсем.*) Çапла, вăл сирĕнтен аякра тăрать. (*Ачасене ушкăнпа тата уйрăмшарăн «*аякра тăрать*» тесе калаттарать.*)

В о с п и т а т е л ь. Кăвакал хитре-и? Сирĕн ăна лайăхрах курас килет-и? Айтăр-ха ăна çывăхарах килме ыйтатпăр. «Çывăхарах кил, Филя», – тетпĕр. (*Кăвакала ачасен çывăхне илсе пырать.*) Ачасем, куратăр-и, Филя сирĕн пата çывăха пычĕ, халĕ ăна ачашлама та пултаратăр.

В о с п и т а т е л ь. Дима, эсĕ халĕ кăвакал патне тăсăлса çитеетĕн-и? Мĕншĕн?

Д и м а. Вăл çывăхра тăрать.

Воспитатель кӑвакала ытти ачасен ҫывӑхне илсе пырать. Пурте ӑна ачашлама пултараҫҫӗ. Воспитатель ачасене кӑвакал пек утса кӑтартма ыйтать. «Кӑвакалсем» уҫӑлса ҫӳреҫҫӗ, кайран килӗсене таврӑнаҫҫӗ. Уҫӑлса ҫӳренӗ чухне мӗн курнине калаттарать.

*5-мӗш вӑйӑ*

## Кушакӑм, кушакӑм

**Тӗллевсем**: ачасене кӗнекери ӳкерчӗксене сӑнама вӗрентесси; кушак ҫинчен калаҫма хӑнӑхтарасси; мимика тӑрӑх сӑнарсен кӑмӑлне пӗлме пулнине кӑтартасси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Воспитатель ачасене юмахсем тӑрӑх ӳкернӗ тӗрлӗ кушак ӳкерчӗкӗсене кӑтартать. Хӑш ӳкерчӗк е сӑнар килӗшни ҫинчен калаҫу ирттерет.

В о с п и т а т е л ь. Ҫак ӳкерчӗкри кушак ҫурин сӑнӗ мӗнле?

Ачасене «Ку ӳкерчӗкре кушакӑн кӑмӑлӗ лайӑх, ку ӳкерчӗкре хӑранӑ пек (тӗлӗннӗ пек, мӗскӗн, макӑрас пек) курӑнать» тесе калама пулӑшмалла. Воспитатель ӳкерчӗке тимлӗ тишкерекен, кӑсӑклӑ каласа паракан ачасен тӗслӗхӗсене палӑртать.
Воспитатель ачасене кушак тетте е ӳкерчӗк кӑтартать. Чӑваш халӑхӗн йӑпатмалли-илӗртмелли такмакӗсене аса илтерет. 3–4 ачана хӑй хыҫҫӑн калаттарать.

– Кушакӑм, кушакӑм,
Ӑҫта каян, кушакӑм?
– Кукамай патне каятӑп
Ҫуллӑ пӑтӑ ҫимешкӗн.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, кушак ӑҫта каять? Кушак кукамай патӗнче мӗн ҫиет?

А ч а с е м. Ҫуллӑ пӑтӑ ҫиет.

Вӑйӑ вӗҫӗнче воспитатель ачасене кушак ҫинчен тепӗр сӑвӑпа паллаштарать.

**Мӑркка тус**

Пирӗн килте кушак пур,
Чӑннипех те пит маттур.
Мӑркка тетӗн те ӑна,
Йӑпшӑнать вӑл сан патна.
Ҫитерсессӗн апатне
Урипе шӑлать питне.
Вӑл манмасть хӑй тивӗҫне –
Тустарать шӑшисене.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сире сăвă килĕшрĕ-и? Кушака мĕнле чĕнеççĕ?

А ч а с е м. Мăркка.

В о с п и т а т е л ь. Кушак мĕн тăвать?

А ч а с е м. Кушак питне çăвать, шăши тытать, йăпшăнать.

Воспитатель сăвва тепĕр хут вуласа парать.

*6-мĕш вăйă*

**Автана тĕк парнеле**

**Тĕллевсем**: Ачасене *хĕрлĕ, сарă, симĕс* тĕссен ячĕсене калаттарасси; воспитатель ыйтăвĕсене хуравлама хăнăхтарасси.

В ă й ă й ĕ р к и

Мольберт çине пысăк автан ӳкернĕ. Унăн хӳри авăнчăк (хӳрине сăрламан). Автан хӳри пуçланакан вырăнта хушăк хăварнă. Сĕтел çинче хутран касса хатĕрленĕ тĕксем.

В о с п и т а т е л ь (*ачасене хитре хӳреллĕ автан кăтартса*). Пирĕн пата хăнана мĕн килнĕ? Автан хитре-и? Унăн хӳри мĕнле? Мĕн тĕслĕ? Ӳкерчĕкри автан та хитре хӳреллĕ пуласшăн. Айтăр-ха ăна та хĕрлĕ, сарă, симĕс тĕксем парнелер.

В о с п и т а т е л ь. Автан, сана мĕн тĕслĕ тĕк кирлĕ?

А в т а н. Хĕрлĕ.

В о с п и т а т е л ь (*хĕрлĕ тĕслĕ тĕк тупса, автанăн хӳри çине çыпăçтарса*). Акă сана, автан тус, хĕрлĕ тĕк.

А в т а н. Ки-ки-ри-кук! Халĕ мана Миша тĕк парнелетĕр.

М и ш а. Автан, сана мĕн тĕслĕ тĕк кирлĕ?

А в т а н. Симĕс тĕк кирлĕ.

Кайран ачасем хăйсем тĕллĕн тĕксем суйласа илсе вĕсен тĕсĕсене калаççĕ. (*Эпĕ автана сарă, хĕрлĕ, симĕс тĕк парнелетĕп.*) Ача тĕсе тĕрĕс мар каласан автан: «Ки-ки-ри-кук! Мана урăх тĕслĕ тĕк кирлĕ. Симĕсси кирлĕ!» – тесе кăшкăрать. Юлашкинчен ачасем автанăн илемлĕ хӳрипе киленеççĕ.

А в т а н. Манăн хӳре питĕ хитре!

А ч а с е м. Питĕ-питĕ илемлĕ!

В о с п и т а т е л ь. Автан кăмăллă. Вăл мана хăйĕн çинчен сăвă вулама ирĕк пачĕ.

Пирĕн килте автан пур –
Ĕненмесен пырса кур.
Хăйĕн уçă сассине

Шеллемест вăл ирхине.
Пыр тĕпĕнчен кăшкăрать
Ки-ки-ри-ку! юррине.
Хăй тăрсанах вăратать
Аттепеле аннене.

*Анна Данилова*

Воспитатель сăвва тепĕр хут вулать.

В о с п и т а т е л ь. Автан мĕнле авăтать?

А ч а с е м. Ки-ки-ри-ку!

*7-мĕш вăйă*

**«Хĕл мучи» ӳкерчĕке тишкересси**

**Тĕллевсем**: ачасене ӳкерчĕке сăнама, унта мĕн сăнланине ăнланма вĕрентесси; воспитатель ыйтăвĕсене хуравланă чух персонажсен хушшинчи çыхăнăва ăнланма вĕрентесси; пуплеве аталантарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Паян эпир сирĕнпе асамлă картинăпа паллашатпăр. Вăл сире килĕшессе шанатăп. Тĕрĕслĕпĕр-и?

Ачасем картинăна сăнаççĕ. Малтан воспитатель вĕсен калаçăвне хутшăнмасăр итлесе тăрать.



*Хĕл мучи*

В о с п и т а т е л ь. Ача сачĕн чӳречи умĕпе Хĕл мучи утать. Вăл мĕн тăхăннă?

А ч а с е м. Кĕрĕк, çăм атă, калпак.

В о с п и т а т е л ь. Хӗл мучи мӗн тӗслӗ кӗрӗк (калпак, ҫӑм атӑ) тӑхӑннӑ?

А ч а с е м. Хӗрлӗ кӗрӗк, хӗрлӗпе шурӑ тӗслӗ калпак, хӑмӑр ҫӑм атӑ тӑхӑннӑ.

В о с п и т а т е л ь. Хӗл мучи мӗн йӑтса пырать?

А ч а с е м. Парне тултарнӑ пысӑк михӗ.

В о с п и т а т е л ь. Михӗ ҫинче мӗн ларать?

А ч а с е м. Пакша.

В о с п и т а т е л ь. Картинӑра тата мӗн куратӑр? Ачасем ӑҫта?

А ч а с е м. Ача садӗнче, чӳречерен пӑхаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Арҫын ача савӑннӑ, тем кӑшкӑрать. Мӗнле шутлатӑр, вӑл мӗн тесе кӑшкӑрать-ши?

А ч а с е м. Ура! Хӗл мучи килет!

В о с п и т а т е л ь. Хӗл мучи питӗ хӑвӑрт утать. Хӗр ача вара хӑраса ӳкнӗ. Вӑл мӗнрен хӑранӑ-ши?

А ч а с е м. Хӗл мучи садике кӗмесӗр иртсе каясран хӑранӑ.

В о с п и т а т е л ь. Хӗр ачана йӑпатӑр. «Ан пӑшӑрхан, Хӗл мучи сире асӑрхарӗ, айккипе иртсе каймасть. Ӑна пакша сирӗн ҫинчен аса илтерет», – тейӗр.

В о с п и т а т е л ь. Хӗл мучи аллинче асамлӑ патак. Вӑл Хӗл мучие хӑвӑрт-хӑвӑрт ҫӳреме пулӑшать, ҫавӑнпа вӑл пур ҫӗре те ӗлкӗрет. Эсир Хӗл мучие кӗтетӗр-и? Сӑвӑ каласа пама хатӗр-и? Атьӑр Хӗл мучи ҫинчен сӑвӑ калар, юрӑ юрлар.

Хӗл мучи ҫинчен юрӑ юрлаҫҫӗ.

*8-мӗш вӑйӑ*

## Хӑнара – куккук

**Тӗллевсем**: ачасене [к], [к’] сасӑсене тӗрӗс калама вӗрентесси, *пысӑк – пӗчӗк, пӗрре – нумай* ӑнлавсемпе калаҫура усӑ курма хӑнӑхтарасси.

В ӑ й ӑ  й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь (*ачасене куккук ӳкерчӗкне кӑтартса*). Паян пирӗн пата хӑнана кайӑк килнӗ. Ку кайӑкӑн ятне кам пӗлет?

А ч а с е м. Куккук.

В о с п и т а т е л ь. Куккук вӑрманта пурӑнать. Вӑл ку-ку! тесе авӑтать. (*Куккук сассине Интернетра тупса итлеттерме пулать.*) Ачасем, куккук авӑтнине кам астуса юлчӗ? (*Ачасене пурне те пӗрле тата уйрӑмшарӑн евӗрлесе калаттарать.*)

В о с п и т а т е л ь. Куккукпа выляма чăх хайĕн чĕпписемпе килчĕ. Чăх миçе?

А ч а с е м. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Чĕпписем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Чăх пысăк-и е пĕчĕк?

А ч а с е м. Пысăк.

В о с п и т а т е л ь. Чăх чĕпписем мĕнле?

А ч а с е м. Пĕчĕк.

В о с п и т а т е л ь. «Кăт-кăт-кăт! Инçе ан кайăр! Кушак кунталла килет!» – тесе калать чăх хăйĕн чĕпписене. Чăх чĕпписене мĕн калать?

А ч а с е м (*ушкăнпа тата уйрăмшарăн хуравлаççĕ*). Кăт-кăт-кăт! Инçе ан кайăр – кушак çумрах çӳрет.

В о с п и т а т е л ь. Чăх чĕпписем кушакран хăраççĕ. Мĕншĕн хăраççĕ?

А ч а с е м. Тытса çиесрен хăраççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кушак тахçанах пӳрте кĕнĕ. Вăл пӳртре мĕн тунине пĕлес килет-и? Вăл хуçине сухан шуратма пулăшать. «Ак-ак-ак», – макăрать кушак. Кушак тĕрĕс макăрать-и?

А ч а с е м. Кушак ак-ак-ак! тесе макăрмасть!

Воспитатель кушака тытса куккук пек, автан пек, чăх пек, шапа пек сассем кăларса кăтартать. Ачасем кашнинчех: «Кушак ку-ку! тесе каламасть», «Кушак ку-ка-ре-ку! тесе макăрмасть», «Кушак кăт-кăт-кăт! тесе кăтăкламасть», «Кушак ква-ква! тесе каламасть», – теççĕ. Воспитатель çак мелпе ачасене [к] сасса калама хăнăхтарать.

В о с п и т а т е л ь. Куккук пире хăйĕнпе вылянăшăн тав тăвать. Куккук мĕн каласа тав тăвать-ши?

А ч а с е м. Ку-кук!

В о с п и т а т е л ь. Эпир куккука мĕнле тав тăватпăр?

А ч а с е м. Тавах. Пирĕн пата татах кил.

# КĂРЛАЧ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**«Виçĕ упа» юмаха итлер-и?**

**Тĕллевсем**: ачасене «Виçĕ упа» вырăс халăх юмахĕпе паллаштарасси; пысăк калăпăшлă хайлавсене итлеме хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасене юмахри пулăмсене мĕнле ăша хывнине асăрхама май пултăр тесе ăна вуласа мар, каласа парать.

В о с п и т а т е л ь. Паян пирĕн пата хăнана Маша ятлă хĕр ача килнĕ. Пĕррехинче вăл вăрманта çухалса кайнă. Кайран мĕн пулса иртнĕ-ха? Итлесе пăхар.

Воспитатель кĕнекери ӳкерчĕксене кăтартса пырать, персонажсене евĕрлесе калать.

**Виçĕ упа**

Пĕр хĕр ача вăрмана кайнă. Вăл унта çухалса кайнă та киле каймалли çул шырама пуçланă. Утсан-утсан вăрманта пĕр пӳрт тĕлне пулнă. Пӳртĕн алăкĕ уçă, хĕр ача пӳрте кĕнĕ.

Ку пӳртре виçĕ упа пурăннă. Пĕри, пысăкки, – Михайло Иванович, тепри, вăтамраххи, – Настасья Петровна, виççĕмĕшĕ, пĕчĕкки, – упа çури пулнă. Ăна Мишутка тесе чĕннĕ.

Упасен пӳрчĕ икĕ пӳлĕмлĕ пулнă. Хĕр ача пĕрремĕш пӳлĕмне кĕнĕ те сĕтел çинче виçĕ чашăк курнă. Чашăксенче яшка пулнă. Пĕрремĕш чашăкĕ, пысăкки, – Михайло Ивановичăн, иккĕмĕш, вăтамраххи, – Настасья Петровнăн, виççĕмĕшĕ – кăвак чашăк, чи пĕчĕкки – Мишуткăн пулнă. Кашни чашăк çумĕнче кашăк выртнă: пысăкки, вăтамраххи тата пĕчĕкки.

Хĕр ача малтан пысăк кашăкпа пысăк чашăкран яшка çисе пăхнă, ун хыççăн – вăтамрах чашăкран вăтамрах кашăкпа, кайран пĕчĕк чашăкран пĕчĕк кашăкпа çинĕ. Пĕчĕк кăвак чашăкри яшка питĕ тутлă пулнă.

Хĕр ачан ларсах çиесси килнĕ. Пӳлĕмре виçĕ пукан курах кайнă. Пĕрремĕшĕ, чи пысăкки, – Михайло Ивановичăн, вăтамраххи – Настасья Петровнăн, виççĕмĕшĕ – чи пĕчĕкки, хĕрлĕ минтерли – Мишуткăн пулнă. Маша чи пысăк пукан çине хăпарса кайнă та урайне ӳкнĕ. Унтан вăтамраххи çине хăпарса ларнă, унта майлах мар пек туйăннă. Кайран пĕчĕк пукан çине ларнă та кулсах янă: ун çинче ларма питĕ лайăх иккен. Хĕр ача яшкана пĕтĕмпех çисе янă та пукан çинче сиккелеме пуçланă.

Пуканĕ çĕмĕрĕлсе кайнă та, Маша çĕре ӳкнĕ. Хĕр ача урайĕнчен тăнă та пуканне хăй вырăнне лартнă. Унтан тепĕр пӳлĕме кĕнĕ. Кунта виçĕ кравать ларнă: пĕрремĕшĕ, пысăкки, – Михайло Ивановичăн, вăтамраххи – Настасья Петровнăн, виçĕмĕшĕ, чи пĕчĕкки, Мишуткăн пулнă. Хĕр ача пысăкки çине хăпарса кайнă, кунта ăна ытла аслă пек туйăннă; вăтамми çине выртнă, анчах кравачĕ ытла çӳллĕ пулнă; пĕчĕк кравать çине выртнă та шăпах кунта майлă пулнă, вăл вара çывăрсах кайнă.

Упасем киле питĕ выçса таврăннă, вĕсен апат çиес килнĕ. Пысăк упи хăйĕн чашăкне тытнă та çав тери хăрушă сасăпа кăшкăрнă:

– Кам манăн чашăкран çинĕ?!

Настасья Петровна хăйĕн чашăкĕ çине пăхнă та çинçерех сасăпа çухăрнă:

– Кам манăн чашăкран çинĕ?!

Мишутка хăйĕн пушă чашăкне курнă та:

– Кам манăн чашăкран çинĕ те нимĕн те хăварман?! – тесе çухăрнă.

Пысăк упи хăйĕн пуканĕ çине пăхнă та çав тери хăрушă сасăпа кăшкăрнă:

– Кам манăн пукана вырăнтан шутарнă?!

Настасья Петровна пуканĕ çине пăхнă та çинçерех сасăпа çухăрнă:

– Кам манăн пукана вырăнтан хускатнă?!

Мишутка хăйĕн çĕмрĕк пуканне курнă та:

– Кам манăн пукана çĕмĕрсе пăрахнă?! – тесе çухăрнă.

Упасем тепĕр пӳлĕме кĕнĕ.

– Кам ман тӳшеке арпаштарса пĕтернĕ?! – хăрушă сасăпа кăшкăрнă пысăк упа.

– Кам хăйнă манăн тӳшеке лӳчĕркеме?! – çинçе сасăпа çухăрса янă Настасья Петровна.

Мишутка пукан лартса хăйĕн кравачĕ çине улăхса кайнă та çинçе сассипе:

– Кам ман тӳшек çинче выртнă-ши?! – тесе кăшкăрнă хăйĕн çинçе сассипе.

Сасартăк вăл хĕр ачана курах кайнă. Вара питĕ çинçе сасăпа çухăра пуçланă:

– Акă вăл! Тыт, тыт! Акă вăл! Ай-яй! Тыт!

Вăл хĕр ачана тытма хатĕрленнĕ. Анчах та хĕр ача вăраннă та чӳрече еннелле вăркăннă. Чӳрече уçă пулнă. Маша кантăкран сикнĕ те тарма пуçланă. Упасем ăна хăваланă-хăваланă – ниепле те çитеймен.

Воспитатель юмаха каласа пĕтерсен ачасене упасемпе Маша калакан сăмахсене сасса тĕрлĕрен улăштарса калаттарать: «Кам манăн пукана вырăнтан хускатнă?!», «Кам манăн чашăкран çинĕ?!», «Кам манăн пукана çĕмĕрсе пăрахнă?!» т. ыт. те.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир юмаха питĕ тимлĕ итлерĕр. Хăвăра пуçран шăлса: «Эпĕ маттур!» – тесе мухтăр.

В о с п и т а т е л ь. Машăна (пуканене) хăйĕн çинчен каласа панăшăн тав тăватпăр. Вăл килне кайма пуçтаранчĕ. «Маша, чипер кай, татах кил», – тесе калатпăр.

*2-мĕш вăйă*

## Кам чĕнчĕ?

**Тĕллевсем**: ачасене евĕрлев сăмахĕсене уйăрма, [к], [к'] сасăсене тĕрĕс калама вĕрентесси; юлташсене сасран палласа илме хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасене питĕ тимлĕ итлеме, мĕн сассине илтнине калама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Ирхине. Йĕри-тавра шăп. Сасартăк ки-ки-ри-кук! тени илтĕнсе каять. Ку мĕн вăраннă?

А ч а с е м. Автан.

В о с п и т а т е л ь. Автан мĕнле авăтать?

А ч а с е м. Ки-ки-ри-кук!

В о с п и т а т е л ь. Картишĕнче тем кăт-кăтик! кăт-кăтик! тесе кăтăклать. Ку мĕн?

А ч а с е м. Чăх.

В о с п и т а т е л ь. Ква-ква-ква! тени юнашарах илтĕнчĕ. Ку мĕн кваклатать?

А ч а с е м. Шапа.

В о с п и т а т е л ь. Аякран ку-ку! ку-ку! тени илтĕнчĕ. Кусем мĕнсем? (*Ачасем хуравлаççĕ.*) Куккук мĕнле авăтать?

А ч а с е м. Ку-ку! Ку-ку!

## Кам чĕнчĕ?

Воспитатель ачасене куçĕсене хуплама ыйтать, пĕр ачана ширма хыçне пытантарать. Пытаннă ача автан, чăх, куккук, шапа сассисене евĕрлесе калать, тантăшĕсен ачана сасран уйăрса илмелле. Ача сассине кам маларах палласа илет, çав ертӳçĕ пулать. Вăхăт юлсан воспитатель А. Хум çырнă «Эсĕ мĕн ятлă?» сăвва темиçе хут вуласа парать. Ачасем евĕрлев сăмахĕсене калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Эс мĕн ятлă? Ка-ка-ка!
Эс мĕн ятлă? Нарт-нарт-нарт!
Эс мĕн ятлă? Чим-чим-чим!
Эс мĕн ятлă? Хам-хам-хам!
Эс мĕн ятлă? Мăр-мăр-мăр!
Эс тата? Нăрик-нăрик!

Тӗлӗнсе тăрать Прахур:
Кур-ха, темле ят та пур.
Ку ятсенче мӗнсем пытаннă? (Хур, кăвакал, çерçи…)

*3-мӗш вăйă*

**Хăнара – мулкач**

**Тӗллевсем**: ачасене вуласа панине ӳкерчӗк çине пăхмасар ăнланма хăнăхтарасси, калаçăва явăçтарасси.

В ă й ă й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь (*çемçе тетте кăтартса*). Ачасем, пăхăр-ха, пирӗн пата хăнана мӗн килнӗ?

А ч а с е м. Мулкач.

В о с п и т а т е л ь. Мулкача сывлăх сунатпăр. Сирӗн унпа паллашас килет-и? Мулкачăн пуçӗ, куçӗ, сăмси, çăварӗ пур. Ачасем, сирӗн сăмса, куç, çăвар пур-и?

А ч а с е м. Пур. (*Кăтартаççӗ.*)

В о с п и т а т е л ь. Мулкачăн хăлхи вăрăм, хӳри кӗске, кӗлетки унăн çăмламас. Мулкач ялт! ялт! сиккелет. Мулкач мӗнле сикет? (*Ачасем мулкач пек сикеççӗ.*) Мулкач çинчен юмах итлес килет-и?

Воспитатель ачасене Л. Славина çырнă «Зайчик» калава чăвашла каласа парать.

**Мулкач**

Пурăннă тет пӗр мулкач. Вăл çулла питӗ лайăх пурăннă. Вăрманта ун валли апат нумай пулнă: симӗс курăк, çырла, тымарсем, ăвăс хуппи. Хӗл çитнӗ. Йӗри-тавра шурă юр выртнă. Мулкач ялти пахчана кишӗр, купăста шырама кайнă. Кишӗр çук. Купăста çук. Çынсем çимӗçсене пуçтарса килӗсене илсе кайнă. Мулкач апат шырама ача садне кайнă. «Ачасем, мана тата манăн ачасене çиме кишӗр кирлӗ, парăр тархасшăн», – тесе ыйтнă вăл ачасенчен.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, мулкача пулăшатпăр-и?

Ачасем карçинккана кишӗрпе пан улми хураççӗ те мулкача параççӗ.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккана мӗн хутăмăр?

А ч а с е м. Пан улми, купăста, кишӗр.

В о с п и т а т е л ь. Мулкач çăтăрт-çăтăрт! çăтăрт-çăтăрт! туса çиет. Пире тав тăвать. Мулкач мӗнле çиет?

А ч а с е м (*уйрăмшарăн тата ушкăнпа калаççӗ*). Çăтăрт-çăтăрт! çăтăрт-çăтăрт!

Воспитатель мулкач мӗн çиме юратни çинчен сăвă итлеме сӗнет.

**Мулкачă**

Çеремлĕхре мулкачă
Сиккелет:
– Çиес килет кулачă! –
Текелет.
Сăмахлама мулкачă
Пит ăста:
Унăн кăпăш кулачă –
Купăста.

*Н. Ытарай*

В о с п и т а т е л ь. Мулкач мĕн çиме юратать?

А ч а с е м. Купăста.

**Мулкач ларать**

Мулкач ларать пашкаса,
Ик хăлхине вылятса.
Ак çапла, ак çапла
Ик хăлхине вылятса.

Ачасем, мулкач хăлхине вылятнă пек, аллисене çулелле çĕклесе вылятаççĕ.

Тусеймерĕ сиввине,
Ăшăтать вăл тяппине.
Ак çапла, ак çапла
Ăшăтать вăл тяппине.

Ачасем урисемпе тăпăртатаççĕ.

Сивĕрех ăна тăма,
Вăл пуçларĕ ташлама.
Ак çапла, ак çапла
Вăл пуçларĕ ташлама.

Ачасем сиккелесе çаврăнаççĕ.

*4-мĕш вăййă*

**Пуканене пӳлĕм туса паратпăр**

**Тĕллевсем**: ачасене сĕтел-пукан ячĕсене тĕрĕс калама хăнăхтарасси; евĕрлев сăмахĕсене калаттарасси; пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентесси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Ачасем пĕчĕк сĕтел тавра çурма çаврака пулса лараççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*ушкăна пукане илсе кĕрет*). Кунта (*сĕтел çине кăтарт-*

*са*) Катьăн пӳлĕмĕ пулать. Вăл унта пурăнать. Катя, сана пӳлĕмӳ килĕшет-и? Ачасем, Катьăран ыйтăр-ха, ăна пӳлĕм килĕшет-и?

А ч а с е м (*пуканерен ыйтаççĕ*). Катя, сана пӳлĕм килĕшет-и?

К а т я. Çук, мана пӳлĕм килĕшмест. Унта сĕтел, пукан, кравать çук.

Воспитатель кравать лартса парать.

В о с п и т а т е л ь. Ку мĕн? Катьăна мĕншĕн кравать кирлĕ?

А ч а с е м. Катя кравать çинче çывăрать.

В о с п и т а т е л ь (*пуканене кравать çине вырттарса)*. Катя, вырт тархасшăн.

Ушкăнпа тата уйрăмшарăн тепĕр хут калаççĕ. Катя выртать.
Ачасем воспитательпе пĕрле сăпка юрри юрлаççĕ.

Нянине-папине,
Папине-нянине.
Çывăр, çывăр, пысăк пул! (*2 хут юрлаççĕ.*)

В о с п и т а т е л ь. Çывăртăрах. Эпир ун пӳлĕмне сĕтел лартатпăр. Сĕтел кирлĕ-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Сĕтел мĕн тума кирлĕ? Тенкелсем кирлĕ-и? Тенкелсем мĕн тума кирлĕ? (*Ачасен хуравĕсене итлет те пӳлĕме сĕтел тата тенкелсем лартать.*)

Унтан воспитатель кĕпе-тумтир шкапĕ, чашăк-тирĕк шкапĕ лартса парать. Ачасенчен çак сĕтел-пукан ячĕсене ыйтать. Вĕсем мĕн тума кирлине ăнлантарса парать. Кашни шкапа кирлĕ япаласем хурать. Буфета чашăк-тирĕк лартать, кĕпе-тумтир шкапне кĕпесем çакать. Пӳлĕме хатĕрлесе пĕтернĕ хыççăн воспитатель ачасене Катьăна вăратма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Манăн шăнкăравсем пур (*кăтартать*), вĕсем пире Катьăна вăратма пулăшĕç. Итлесе пăхăр-ха, пĕчĕк шăнкăрав мĕнле шăнкăртатать: чăнкăр-чăнкăр-чăнкăр. Халĕ эсир калăр.

А ч а с е м (*ушкăнпа тата пĕчченшерĕн*). Чăнкăр-чăнкăр-чăнкăр!

В о с п и т а т е л ь. Пысăк шăнкăрав, вăл пирĕн çук, çакăн пек сас парать: шăнкăр-шăнкăр! шăнкăр-шăнкăр! Пысăк шăнкăрав мĕнле сас парать?

А ч а с е м. Шăнкăр-шăнкăр! шăнкăр-шăнкăр!

Катя вăранать, çĕнĕ сĕтел-пуканшăн савăнать. Вăл ачасенчен шкаппа буфет çинчен ыйтать. Ачасем пукане ыйтăвĕсене хуравлаççĕ. Катя кĕпе-тумтир шкапĕпе буфет, сĕтел-пукан ячĕсене пăтраштарса калать. Ачасен пукане йăнăшĕсене тӳрлетмелле.

*5-мĕш вăйă*

## Çак юмаха астăватăр-и?

**Тĕллевсем**: ачасене пĕлекен юмахсене аса илтересси, юмахри сыпăксене кăтартса пама пулăшасси; çĕнĕ йăпатмалли такмака астуса юлма пулăшасси.

### В а й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасене **«Виçĕ упа»** юмаха каласа пама пуçлать.

В о с п и т а т е л ь. «Виçĕ упа» юмах. Пĕр хĕр ача вăрмана кайнă. Вăл унта çухалса кайнă та киле каймалли çул шырама пуçланă. Утсан-утсан вăрманта пĕр пӳрт тĕлне пулнă. Пӳртĕн алăкĕ уçă, хĕр ача пӳрте кĕнĕ.

Ку пӳртре виçĕ упа пурăннă.

Ачасем аса илер-ха, упасем мĕнле пулнă: пĕчĕк-и е пысăк-и?

А ч а с е м. Пĕрремĕшĕ пысăк, иккĕмĕшĕ – вăтамрах, виççĕмĕшĕ – пĕчĕкки – Мишутка.

В о с п и т а т е л ь. Вĕсем килне таврăнсан мĕн каланă? Мĕнле сасăпа калаçнă?

А ч а с е м (*сассисене улăштарса*). Кам манăн чашăкран çинĕ?!

– Кам манăн пукана вырăнтан шутарнă?!

– Кам манăн пукана çĕмĕрсе пăрахнă?!

– Кам ман вырăн çинче выртнă?!

– Акă вăл! Тыт, тыт! Акă вăл! Ай-я-яй! Тыт!

Воспитатель ачасене «Виçĕ упа» вăййă выляттарать. Упасем киле таврăнсан хăйсене мĕнле тытнине хускану туса кăтартма ыйтать. Упасемпе упа çури хăйсен чашăкĕсенчен такам çисе пăхнă саманта выляса кăтартма ыйтать. «Кам ман чашăкран çисе пăхнă?!» тесе тĕрлĕ сасăпа калаттарать.

Унтан воспитатель ачасене **«Кашкăр тата çичĕ качака путекки»** юмаха аса илтерет. Качака путеккисем кашкăр алăк хыçĕнче тăнă самантра мĕн каланине аса илме сĕнет. Воспитатель кашкăр сăмахĕсене калать, ачасем – качака путеккисен сăмахĕсене.

В о с п и т а т е л ь. Уçăр, ачамсем, уçăр, аннĕр вăрмантан таврăнчĕ!

А ч а с е м. Илтетпĕр, илтетпĕр! Эсĕ пирĕн анне мар. Санăн сассу хулăн!

В о с п и т а т е л ь. Качака путеккисем ăслă пулнă тата вĕсем амăшне итленĕ. Амăшĕ вĕсене кашкăра алăк уçма хушман, качака путеккисем хăйсен сăмахне тытнă. Качака путеккисене кашкăр тытайман.

Воспитатель ачасене **«Пĕчĕк хăяр»** юмахпа паллаштарать.

В о с п и т а т е л ь. Хăяр вара… Хăяр йăран вĕçне тарма шутланă. Унта шăши пурăннă, малалла мĕн пулнă-ши?

Пурăннă тет пĕр пĕчĕк хăяр, вăл сип-симĕс пулнă, симĕс çулçăсем хушшинче ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ ăна питĕ юратнă. Ашшĕ пысăк хăяр пулнă, амăшĕ – вăтамраххи, ачи вара – чи пĕчĕкки. Хăярсем йăран çинче симĕс çулçăсем хушшинче пурăннă.

Йăран вĕçĕнче шăши пулнă. Шăши пĕчĕккĕ, сăрă тĕслĕ, вăрăм хӳреллĕ. Вăл хăвăрт чупать, шăтăкра пурăнать.

Пӗчӗк хӑяра ашшӗпе амӑшӗ инҫе кайма хушман. Вӗсем ҫапла каланӑ:

Хӑярӑм, хӑярӑм!
Йӑран вӗҫне эс ан кай,
Унта шӑши пурӑнать,
Хӑярсене вӑл кӑшлать.

Пӗчӗк хӑяр итлемен, вӑл шӑши пурӑннӑ енне кайса курма шутланӑ. Хӑяр утнӑ-утнӑ та шӑши пурӑннӑ вырӑна ҫитнӗ. Шӑши шӑтӑкӗнчен чупса тухнӑ, хӑяра тытма шутланӑ. Хӑяр аран-аран тарса хӑтӑлнӑ шӑширен.

Воспитатель йӑпатмалли такмака тепӗр хут калать.

Воспитатель ачасене «Пӗчӗк хӑяр» вӑййӑ выляма сӗнет.
Хӑярпа шӑши сӑнарӗсене вылякан ачасене суйлать. Ачасемпе пӗрле такмака вулать, хӑяр вара шӑппӑн шӑши патне пырать. Шӑши йӑвинчен сиксе тухать, хӑяр унтан тарса пытанать.
Вӑййа темҫе хут выляҫҫӗ.

*6-мӗш вӑййӑ*

## Кам унта?

**Тӗллевсем**: ачасене [т], [т’] сасӑсене уҫҫӑн калама вӗрентесси; ачасен тимлӗхне аталантарасси; ачасене хӑйсен ячӗпе хушаматне тӗрӗс калаттарасси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Воспитатель ачасене теттесем кӑтартать, вӗсен ячӗсене калама ыйтать. Ачасем япаласен ячӗсене каласа тухаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Сӗтел ҫинче эсир мӗн куратӑр?

А ч а с е м. Тутӑр, пӳрт, тӗкӗр, тилӗ, сӗтел, мӑлатук.

Воспитатель япаласене илсе хурать, йывӑҫ мӑлатука кӑна хӑварать. Вӑл мӗнле сас кӑларнине итлеме сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Эсир мӑлатук шакканине илтнӗ-и? Вӑл тук-тук-тук! тесе шаккать. Ал ҫӑмӑрне мӑлатук пек тытӑр та ал тупанӗ ҫине шаккӑр. Мӑлатук мӗнле шаккать?

А ч а с е м. Тук-тук-тук! тесе шаккать.

Воспитатель 4–5 ачана мӑлатук шакканине туса кӑтартма тата сӑмахпа калама сӗнет.

В о с п и т а т е л ь. Ман мӑлатук хыттӑн тата шӑппӑн шаккама пултарать (*сӗтеле шаккать*), мана хыттӑн тата шӑппӑн шаккама пулӑшӑр.

Тук-тук-тук!
Шаккать пысăк мăлатук.
Тук-тук-тук! тук-тук-тук!
Шаккать пĕчĕк мăлатук.

А ч а с е м (*шакканă май*). Тук-тук-тук!

В о с п и т а т е л ь. Халĕ мăлатук хуллен (майĕпен, ерипен) тата хăвăрт шаккать. Сасă мĕнле илтĕнет? (*Ачасен хуравĕсем.*)

В о с п и т а т е л ь (*сĕтеле тĕрлĕ япалапа шакканă май*). Мĕнле сасă илтĕнет?

А ч а с е м. Тюк-тюк-тюк!

В о с п и т а т е л ь. Халĕ, ачасем, шăппăн ман хыçран каласа пырăр: тук-тук, тюк-тюк, тук-тюк, тюк-тук, тюк-тюк-тюк, тук-тук-тук.

В о с п и т а т е л ь. Эпир Димăпа эсир пурăнакан хваттере шаккатпăр. Эсир: «Кам унта?» – тесе ыйтатăр та алăка уçатăр. Алăк «трăк-трак» тесе уçăлать, пире кĕме ирĕк паратăр.

В о с п и т а т е л ь. Тук-тук-тук!

А ч а с е м. Кам унта?

В о с п и т а т е л ь. Ку эпĕ, Валентина Ивановна.

Д и м а. Эпĕ Дима Орлов.

А ч а с е м. Трăк-трак! Трăк-трак! Кĕрĕр тархасшăн.

Вăййа тата тепĕр 4–5 хут вылямалла. Воспитатель кашнинчех урăх ачана выляттарать.

*7-мĕш вăйă*

## Мĕнĕн амăшĕ? Мĕнĕн çăвăрĕ (чĕппи)?

**Тĕллевсем**: ачасене килти чĕр чунсене тата вĕсен çăвăрĕсен (чĕппи-сен) ячĕсене тĕрĕс калама вĕрентесси; сăнласа панă тăрăх чĕр чуна паллама хăнăхтарасси.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель фланелеграф çине чĕр чунсен тата вĕсен çăвăрĕсен ӳкерчĕкĕсене çирĕплетсе хурать.
Воспитатель ачасенчен хăш ӳкерчĕкре мĕнле чĕр чуна ӳкернине, кама мĕнĕн çăвăрĕ килĕшнине ыйтса пĕлет.

В о с п и т а т е л ь. Хăш чĕр чунăн мăйрака, çилхе, хӳре пур? Хăш чĕр чунăн хӳри вĕçĕ киçтĕклĕ, хăшĕн çинçе, хăшĕн çăмламас, вăрăм… (*Ачасен хуравĕсем.*)



В о с п и т а т е л ь. Мĕнле чĕр чунăн çăмĕ çăмламас, мĕнĕн çăмĕ яка?

А ч а с е м. Кушакпа кушак çурин çăмĕ çăмламас, йытăпа йытă çурин çăмĕ яка.

В о с п и т а т е л ь. Тихан амăшне мĕнле калаççĕ?

А ч а с е м. Лаша.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пăру амăшне мĕнле калаççĕ?

А ч а с е м. Ĕне.

В о с п и т а т е л ь. Пăру амăшне мĕнле чĕнет?

А ч а с е м (*çинçерех сасăпа*). Пăру амăшне му-у-у! тесе чĕнет.

Воспитатель вăйă вĕçĕнче ачасене «Ĕне» сăвва вуласа парать. Ĕне тата пăру мĕнле сас пани çинчен ыйтать.

**Ĕне**

Му-ук! та му-ук! тесе ĕне
Васкаса утать килне.
Çитересшĕн вăл сĕтне
Хăйĕн пĕчĕк пепкине.

*Юхма Мишши*

*8-мĕш вăйă*

**Вĕреннине аса илни**

Ачасене хăш занятири материал йывăр пулнă, çав темăна аса илсе çирĕплетсе хăвармалла.

# НАРĂС УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**Асамлă пăравус**

**Тĕллевсем**: ачасемпе *хĕрлĕ, сарă, хура* тĕссемпе малалла ĕçлесси; сюжетлă картинăна тишкерме вĕрентесси; воспитатель ыйтăвĕсене хуравлама хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Паян эпĕ сире кăсăклă картина кăтартатăп. Эсир мана унта мĕн ӳкернине ăнланма пулăшăр. Эсир ӳкерчĕкре мĕн куратăр?



Сире арçын ачасем мĕн те пулин сӳтсе явнă пек, тĕлĕннĕ пек туйăнмасть-и? Кăвак кĕпе тăхăннă арçын ача çине пăхăр-ха. Вăл аллине айккинелле сарнă, хăй кулать. Айтăр-ха эпир те ун пек тăвар. Ăна тем тĕлĕнтернĕ пулмалла.

Сарă кĕпе тăхăннă арçын ача та кулать. Кăвак машина çинче ларакан ача вара савăннипе тем калать.

Ачасене мĕн савăнтарнă-ши? Вĕсем пурте мĕн çине пăхаççĕ?

А ч а с е м. Пĕчĕк хĕрлĕ пăравус çине пăхаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Çак пăравус камăн-ши? Ман шутпа, пăравуса хура çӳçлĕ арçын ача илсе килнĕ. Вăл еплерех тăнине сăнăр-ха?

А ч а с е м. Аллине кĕсйине чикнĕ.

В о с п и т а т е л ь. Сире картина килӗшет-и? Ун ҫинчен хаваспах каласа паратӑп.

А ч а с е м. Килӗшет.

В о с п и т а т е л ь. Пур арҫын ача та тавар турттаракан, пушар сӳнтерекен, васкавлӑ пулӑшу ҫитерекен тӗрлӗ машинӑпа выляма юрататӑ.

Пӗррехинче хура ҫӳҫлӗ арҫын ача хайсен ушкӑнне пӗчӗк хӗрлӗ пӑравус илсе пынӑ. «Ку питӗ чаплӑ пӑравус», – тенӗ арҫын ача юлташӗсене. «Мӗнпе питӗ чаплӑ вара вӑл?» – тӗлӗннӗ юлташӗсем. Ҫав самантрах ача пускӑч ҫине пуснӑ та, тетте чӑн-чӑн пӑравус пек хаваслӑ кӑшкӑртса тапранса кайнӑ: «У-у-у!». Ачасем савӑннипе алӑ ҫупса янӑ. Тетте хуҫи пуринчен ытларах хавхаланнӑ, мӗншӗн тесен унӑн пӗчӗк юлташӗ – хӗрлӗ пӑравусӗ – ачасене савӑнтарнӑ.

В о с п и т а т е л ь. Пӑравус мӗн тӗслӗ? Вӑл пӗчӗк-и е пысӑк? Пӑравус мӗнле кӑшкӑртать? (*Ачасен хуравӗсем.*)

Халӗ «Пӑравус» вӑйӑ вылятпӑр. Сире пурне те «пӑравус» ҫине ларма ыйтатӑп.

Ачасем пӗр-пӗрин хыҫҫӑн тӑраҫҫӗ те пилӗксенчен тытса «пӑравус» тӑваҫҫӗ, сӑвӑ каласа малалла ҫавракапа утаҫҫӗ.

Каять, каять пӑравус,
Тӗлӗнтермӗш пӑравус,
Урапасӑр, тӑрпасӑр. Стоп!

В о с п и т а т е л ь. «Алӑ ҫупатпӑр, тапӑртататпӑр» ятлӑ чарӑну. Пурте чарӑнатпӑр, алӑ ҫупатпӑр, тапӑртататпӑр. «Пӑравус» малалла тапранать.

Каять, каять пӑравус,
Тӗлӗнтермӗш пӑравус,
Урапасӑр, тӑрпасӑр. Стоп!

*2-мӗш вӑйӑ*

## Кайӑксене хӑналар-и?

**Тӗллевсем**: ачасен пуплевне ҫӗнӗ сӑмахсем кӗртесси; каласа панине тимлӗ итлеме вӗрентесси; [х], [ х҆] сасӑсене тӗрӗс калама хӑнӑхтарасси.

В ӑ й ӑ   й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь. Урамра хӗлле. Йӗри-тавра шурӑ юр выртать. Юр ҫусан эпир кӗреҫе илетпӗр те урама тухатпӑр. Урамра кӗреҫепе юр тасататпӑр (*тӑвайкки тӑватпӑр*). Юртан кӗлеткесем тӑватпӑр. Эпир юр пике (*мулкач, юр чӑмакки*) турӑмӑр. Пӗррехинче пирӗн пата кайӑксем (*уйӑпсем, чакаксем, ҫерҫисем*) вӗҫсе килчӗҫ. Вӗсем апат ҫиесшӗн. Эпир вӗсем валли ҫӑкӑр тӗпренчӗкӗсем (*тырӑ пӗрчисем*) илсе тухрӑмӑр. Эпир ҫӑкӑр тӗпренчӗкӗсемпе

тырă пĕрчисене сырăша сапса патăмăр. Кайăксем апата сăхма пуçларĕç. Сырăш патне (*пирĕн пата, участока*) кашни кун кайăксем вĕçсе киле пуçларĕç. Эпир вара кашни кун кайăксем валли апат илсе тухатпăр. Хăш-пĕр чухне кайăксем пире тутлă апатшăн тав тăваççĕ. Вĕсем чив-чив-чив! тесе юрлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ай-уй! Манăн ал тупанĕ çине пысăк хитре юр пĕрчи ӳкрĕ. Сирĕн ал тупанĕсем çине те юр пĕрчисем вĕлтĕртетсе ӳкрĕç. Вĕсене куратăр-и? Айтăр-ха юр пĕрчисене ал тупанĕ çинчен вĕрсе ятпăр. Ак çакăн пек çăмăллăн, тутана малалла тăсса, çавракалатса, вăрăммăн вĕретпĕр. (*Кăтартать.*) Каллех юр пĕрчисем вĕçсе килчĕç. Вĕсене те вĕрсе яратпăр. (*2–3 хут вĕрет.*) Манăн алă шăнса кайрĕ. Сирĕн вара? Халĕ эпĕ ăна ăшăтатăп.

Воспитатель ал тупанне çавракалатса тути патне илсе пырать те вĕрет: х-х-х. Вăл ачасене те аллисене ăшăтма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. У-у-ух, у-у-ух! Пысăк пуç тăмана çакăн пек кăшкăрать. Вăл вăрмантан вĕçсе килнĕ. (*Ӳкерчĕк кăтартать.*) Тăмана пире хăй пек кăшкăрма вĕрентме килчĕ. Тăмана пек ухлатса пăхар-ха.

А ч а с е м (*ушкăнпа тата пĕчченшерĕн*). У-у-ух, у-у-ух!

В о с п и т а т е л ь (*ӳкерчĕксем кăтартса*). Акă автан! Ай, ун патне тилĕ йăпшăнса пырать. Автана çисе ярасшăн! Хăвăртрах, хăвăртрах, автан, вĕçсе кай!

А ч а с е м (*ушкăнпа тата пĕчченшерĕн*). Хăвăртрах, хăвăртрах, автан, вĕçсе кай!

В о с п и т а т е л ь. Автан хапха çине хăпарса ларчĕ. Тилĕ ăна тытаймасть. Автан савăнать. «Ха-ха-ха, тытаймарăн автана!» – тесе кăшкăрать. Автан мĕн тесе калать?

А ч а с е м. Ха-ха-ха, тытаймарăн автана!

Çак предложение воспитатель ачасене темиçе хут калаттарать. Унтан мольберт çине тăмана, автан, тилĕ ӳкерчĕкĕсене хурать, ачасенчен хăшĕн кĕрĕкĕ тĕкрен, хăшĕн çăмран иккенне ыйтать. Чĕр чунсенчен хăшĕ çăра, çăмламас кĕрĕкпе çӳренине калаттарать.

### *3-мĕш вăйă*

## Пирĕн пĕчĕк Марине…

**Тĕллевсем**: ачасене сăвă содержанине ăнланма пулăшасси; *ăшăх, тарăн* сăмахсене тимлеттересси; сăвăра тĕл пулакан кĕске сăмах майлашăвĕсене каласа пĕтерме вĕрентесси.

### В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене мамăк тирлĕ хĕрлĕ кĕрĕк тăхăннă пукане кăтартать. (Картонран касса тунă пукане те юрать.)

В о с п и т а т е л ь. Марине мĕн тĕслĕ кĕрĕк тăхăннă?

А ч а с е м. Хĕрлĕ кĕрĕк тăхăннă.

Ачасем (ушкăнпа е пĕчченшерĕн) хĕрлĕ кĕрĕк, хăнтăр аркăллă тесе калаççĕ,
Марине хура куçлă тесе çирĕплетеççĕ.
Воспитатель йăпатмăш сăвва икĕ хут вулать.

Хура куçлă Марине,
Пирĕн пĕчĕк Марине,
Хăнтăр аркăллă, хитре
Çĕнĕ хĕрлĕ кĕрĕкпе.

Марине хĕрлĕ кĕрĕкне хывса ушкăнри пĕр хĕр ачана тăхăнма парать (кĕрĕк айĕнче кĕпе е костюм пулмалла). Воспитатель йăпатмăш сăвва вуланă чухне хĕрлĕ кĕрĕк тăхăннă хĕр ача ятне калать. Унтан ача кĕрĕке тепĕр хĕр ачана парать (хăйĕн ирĕкĕпе). Ку вăйă ачасене савăнăç кӳрет, сăвва тата та итлеме хистет.

В о с п и т а т е л ь. Марине хитре, илемлĕ тата вăл ырă кăмăллă хĕр ача. Хăй кăнтăрлахи апата ларсан юратнă тусĕсем çинчен те манса кайман: йыттине те, кушакне те, чăххине те çитернĕ. Йыттине, кушакне *тарăн* турилккепе (*кăтартать*), чăххине *ăшăх* турилккепе (*кăтартать*) панă.

Воспитатель Маринене, ун тусĕсене сĕтел хушшине лартать. Вăл сасăпа палăртакан сăмахсене ачасем ун хыççăн калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк, *тарăн чашăкпа* йытта апат паратпăр.

А ч а с е м. Йытта *тарăн чашăкпа*.

В о с п и т а т е л ь. Пĕчĕк, *тарăн чашăкпа* кушака апат паратпăр.

А ч а с е м. Кушака *тарăн чашăкпа*.

В о с п и т а т е л ь. *Ăшăх чашăкпа* чăхха апат паратпăр.

А ч а с е м. Чăхха *ăшăх чашăкпа*.

Воспитатель калаçнă май кашни сăнар умне хăйсен савăтне лартать.

***Асăрхаттарни.*** Кăнтăрлахи апат çинĕ чухне воспитатель ачасене асăрхаттарса хăварать: «Ачасем сире тарăн турилккене яшка ярса панă, пăтă мĕнле турилккепе панă?» (*Ăшăх турилккепе*).

*4-мĕш вăйă*

## Камăн? Мĕнĕн?

**Тĕллевсем**: предложенири сăмахсене килĕшӳллĕ çыхăнтарма вĕрентесси; пĕлекен сăвăсене вуласа ачасен кăмăлне уçасси, çĕклесси; чашăк-тирĕк ячĕсене ачасен пуплевне кĕртесси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Ачасем сĕтел хушшине лараççĕ. Воспитатель С. Капутикян çырнă «Марине апат çиет…» сăвă содержанине чăвашла калать.

В о с п и т а т е л ь. Пăтта камăн чашăкне хурса панă?

А ч а с е м. Маринен чашăкне.

В о с п и т а т е л ь. Тата мĕнĕн чашăкне пăтă хунă?

А ч а с е м. Йыттăн чашăкне, кушакăн чашăкне, чăхăн чашăкне.

Воспитатель ачасене сĕтел çинчен пĕрер ўкерчĕк илме сĕнет, вĕсем çинче мĕнле япаласем сăнланине ыйтса пĕлет. Унтан ачасене куçĕсене хупма ыйтать, 5–6 ачан ўкерчĕкĕсене пуçтарса илет. Ачасене куçĕсене уçма калать, вĕсем ўкерчĕксене мĕнле астуса юлнине тĕрĕслет.

В о с п и т а т е л ь (*ўкерчĕке кăтартса*). Ку камăн турилкки? Турилкке мĕнле?

А ч а. Ку манăн турилкке.

В о с п и т а т е л ь. Турилкке мĕнле? Турилккепе мĕн çиеççĕ?

А ч а с е м. Турилкке пысăк (пĕчĕк), шурă т. ыт. те. Турилккепе яшка çиеççĕ.

Воспитатель кашни ачаран ыйтать. Ачасем ўкерчĕксене пĕр-пĕринпе улăштараççĕ те вăййа тепĕр хут выляççĕ.

**«Чей ĕçетпĕр» вăййа**. Вăййа пуçламăшĕнче ачасене апата лариччен алă çумалли çинчен, ал шăллипе типĕтмелли çинчен, сĕтел хушшинче хамăра тирпейлĕ тытмалли çинчен калаçтармалла. *Пĕчĕк чашăк, чей чашăкĕ, пĕчĕк кашăк, пĕремĕк* сăмахсемпе усă курмалла.

*5-мĕш вăййа*

## Эпĕ мĕн турăм?

**Тĕллевсем**: ачасене текстпа ўкерчĕк содержанийĕсем хушшинче пĕрпеклĕх пулнине кăтартасси; хирĕçле пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕрĕс калама хăнăхтарасси; тимлĕ пулма вĕрентесси.

### В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель ўкерчĕклĕ «Керменкке» юмах кĕнекисем хатĕрлесе хурать. Ачасене кĕнекери ўкерчĕксене тимлĕ пăхса тухма сĕнет, килĕшнĕ ўкерчĕке кăтартма ыйтать. Ачасем пĕр рете лартнă сĕтелсем хушшине вырнаçнă.
Воспитатель ачасене хăш ўкерчĕк килĕшни çинчен каласа пама ыйтать (4–5 ача калаçать), вĕсене кĕнекене тимлĕ пăхса тухнишĕн мухтать. Малалла хăйне килĕшекен икĕ ўкерчĕк çинчен илемлĕ каласа парать.
Воспитатель кĕнекен пĕр страницине уçать те ўкерчĕк тăрăх ачасене калаçтарать.

В о с п и т а т е л ь. Ку ўкерчĕкре мĕн куратăр? Тата мĕн асăрхамасăр хăвартăмăр? Маттур, ачасем. Эсир паян тата та тимлĕрех ĕçлетĕр.

Халĕ тимлĕ пăхăр та эпĕ мĕн тунине калăр. Эпĕ мĕн тăватăп? Эпĕ кĕне-

кене … *(уçатăп)*, унтан … *(хупатăп).* Банкăна … *(хупатăп, уçатăп).* (*Сăмахсене каланă май ĕçне туса кăтартать.*) Пӳрнесене … *(чăмăртатăп, чăмăртанине уçса яратăп).* Тенкел çине ... *(лартăм, тăтăм).* Тутăр … *(çыхрăм, салтрăм).* Калпак … *(тăхăнтăм, хыврăм).* Алă … *(çĕклерĕм, антартăм).* Сăмса тутрине … *(çĕклерĕм, пăрахрăм).* Ялава … *(çĕклерĕм, антартăм)*» т. ыт. те.

**«Пысăк, пĕчĕк» вăйă.** Воспитатель «пысăк» тесен ачасем тăраççĕ, «пĕчĕк» тесен лараççĕ.

*6-мĕш вăйă*

## Ку камăн япали?

**Тĕллевсем**: ачасен тимлĕхне аталантарасси, тĕс ячĕсене астуса юлма хавхалантарасси, пуплеве аталантарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Сĕтел çинче тĕрлĕ тĕслĕ ӳкерчĕксем е пĕчĕк теттесем (ача шучĕпе) выртаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Паян пирĕн пата питĕ нумай тетте хăнана килнĕ. Сирĕн хăш теттепе выляс килет, çавна суйласа илĕр.

Ачасем пĕрер ӳкерчĕк е тетте суйласа илеççĕ, хăйсем мĕн илнине калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Таня, эсĕ мĕн суйласа илтĕн?
Т а н я. Кушак.
В о с п и т а т е л ь. Кушак мĕн тĕслĕ?
Т а н я. Шурă.
В о с п и т а т е л ь. Коля, санăн аллунта мĕн?
К о л я. Йытă çури.
В о с п и т а т е л ь. Йытă çури мĕнле?
К о л я.  Пĕчĕк. Хура.
В о с п и т а т е л ь. Ачасем, хăвăрăн теттесене тимлĕ пăхăр. Вĕсем мĕн тĕслĕ, калăпăшĕпе мĕнле: пысăк-и, пĕчĕк-и. (*Ачасене хăйсен теттисем çинчен калаттарать.*) Халĕ теттесене тенкелсем çине хурăр та куçăрсене алăпа хуплăр.

Ачасем куçĕсене хупсан воспитатель 4–5 ачан япалине илет. Ачасем куçĕсене уçаççĕ. Воспитатель ӳкерчĕксене е теттесене кăтартса пырать.

В о с п и т а т е л ь. Ку камăн япали? Вăл мĕн тĕслĕ?
Т а н я.  Ку манăн кушак. Кушак шурă.

Теттене е ӳкерчĕке тулли хурав парсан анчах тавăрать. («Ку манăн хура йытă», «Ку манăн симĕс мечĕк»).
Ачасем ӳкерчĕксене е теттесене каялла илсен воспитатель вĕсене пĕр-пĕринпе ылмаштарма ыйтать. Вăйă çĕнĕрен пуçланать.

В о с п и т а т е л ь. Тик-так! Тик-так! Ку сехет шаккать. Хытă, кĕвĕллĕ шаккать. Сехет шаккани сирĕн теттесен киле кайма вăхăт çитнине пĕлтерет. Пурте теттесене сĕтел çине хуратпăр. Хăш тетте килне малтан кайĕ? Куçăрсене хупăр, ан пăхăр. Пурте пĕрле тик-так! тетпĕр. (*Пĕр теттине илсе хурать.*) Куçăрсене уçăр. Хăш тетте çук? Хăш тетте киле кайрĕ? Тепре куçсене хупатпăр. Мĕн улшăнчĕ?

Воспитатель каллех пĕр-пĕр тетте илсе пытарать е вырăнпа ылмаштарса хурать, е тата ăрасна тетте хушса хума пултарать, ачасене «тик-так» тесе калаттарать. Ачасем воспитательпе пĕрле мĕн улшăннине калаççĕ.

*7-мĕш вăйă*

## Поезд

**Тĕллевсем**: [ч] сасса тĕрĕс калама вĕрентесси; ачасен пуплевне çĕнĕ сăмахсем кĕртесси; ӳкерчĕке пăхмасăр калава итлеме хăнăхтарасси, пĕр-пĕринпе туслă выляма хавхалантарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель «Поезд» калава вулать (калаври ачасен ячĕсене ушкăнри ачасен ячĕсемпе улăштарма юрать).

В о с п и т а т е л ь. Пур çĕрте те юр выртать. Маша çунашкапа. Миша та çунашкапа. Толя та çунашкапа. Галя та çунашкапа. Пĕр атте кăна çунашкасăр.

Вăл Гальăн çунашкине илчĕ те Тольăннинчен кăкарчĕ, Тольăннине – Мишăннинчен, Мишăннине – Машăннинчен. Поезд пулчĕ.

Миша кăшкăрать:

– Ту-ту!

Вăл *машинист.*

Марине кăшкăрать:

– Билетăрсене кăтартăр!

Вăл *кондуктор.*

Атте вара вĕрентен туртса: «Чух-чух! Чух-чух!..» – тесе каласа пырать.

Вăл *пăравус.*

*Я. Тайц çырнинчен*

В о с п и т а т е л ь. Поезд мĕнле сас кăларать?
А ч а с е м. Чух-чух! Чух-чух!..

Ачасене пĕчченшерĕн тата ушкăнпа калаттармалла.
Воспитатель калава тепĕр хут вуланă чух ытти ачасен ячĕсене асăнать. Ачасене машинист, кондуктор, пăравус сăмахсене калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр, ачасем, «Пуйăс» вăйă вылятпăр. Эсир хатĕр-и?
А ч а с е м. Вылятпăр, хатĕр!

Вăййа пĕрремĕш хут выляне чухне воспитатель машинист пулать, пĕр ачана кондуктор пулма ыйтать. Ыттисем пĕр-пĕринчен тытăнса, поезд пек, чух-чух-чух! тесе утаççĕ.
Воспитатель Н. Васильев çырнă «Хурçă ут» сăвă сыпăкне калать.

Хам пулам-ха пĕрех хут
Çул çӳрекен хурçă ут.
Тĕл пулсанах çичĕ ют
Сасă парăп:
– Ту-ту-тут!

Ачасем машинистпа пĕрле ту-ту-у-ут! тесе утаççĕ. Поезд чарăнсан кондуктор билетсене тĕрĕслет. Вăййа темиçе хут выляма пулать.

*8-мĕш вăйă*

## Сюжетлă картинăна тишкересси

**Тĕллевсем**: картинăра мĕн курнине ачасене хăйсем тĕллĕн каласа пама хăнăхтарасси; ачасен пуплевне аталантарасси; каласа пама пĕлекен ачасен шутне ӳстересси.

Воспитатель ачасене маларах курнă, вĕсем пĕлекен картинăсене тишкерме сĕнет. Ĕçе пуçланă май воспитатель Г. Хирбю çырнă «Сехет» сăвва калать:

Тик-так! Тик-так!
Ӳркенмесĕр тек таккать,
Йĕппи пĕрмай çаврăнать.
Тик-так! Тик-так!
Вăхăта вăл пĕлтерет,
Ĕç ĕçлеме систерет.

Ачасем картинăсене сăнаççĕ, аса илеççĕ. Картинăсене пăхнă май воспитатель ачасене калав тума, кам? мĕн? мĕн тăвать? мĕнле? ыйтусене хуравлама пулăшать.

# ПУШ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**«Виçĕ упа» юмах тăрăх тунă ӳкерчĕксем**

**Тĕллевсем**: ачасене кĕнекесем курма усăллă та интереслĕ пулнине ăнлантарасси; сăмахсене тĕрĕс сыпăнтарма вĕрентесси; ыйтăва хуравлама хăнăхтарасси.

**Кӳртĕм ĕç**: вăййа ирттериччен пĕр кун маларах воспитатель кĕнеке кĕтесне «Виçĕ упа» юмах кĕнекисем хурать (вĕсен хушшинче Ю. Васнецов илемлетнĕ кĕнекесем пулмалла). Вăл ачасене кĕнекесене пăхма сĕнет. Кам мĕнле ӳкерчĕке кăмăлланине ыйтать.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене кĕнекесем кăтартать. Кама хăш ӳкерчĕк килĕшни çинчен кĕскен каласа парать. Ачасене ӳкерчĕксене тимлĕ пăхнăшăн мухтать.

В о с п и т а т е л ь. Паян пирĕн патра хăнара Мишутка. Вăл пире валли илемлĕ кĕнеке илсе килнĕ. Ку кĕнеке мĕн ятлă-ши?

А ч а с е м. «Виçĕ упа».

В о с п и т а т е л ь. Мĕншĕн çапла шутлатăр?

А ч а с е м. Унта виçĕ упа ӳкернĕ.

Воспитатель кĕнекери ӳкерчĕксене кăтартса ыйтусем парать, ачасем хуравлаççĕ.

– Хĕр ача ăçта кайнă? Вăл киле кайма çул тупайнă-и?

– Хĕр ача мĕн тĕлне пырса çитнĕ?

– Пӳртре мĕн пурăннă?

– Пысăк упа мĕн ятлă? Вăтамраххине, пĕчĕккине мĕнле чĕнеççĕ?

– Упасем ăçта кайнă пулнă?

– Хĕр ача сĕтел çинче мĕн курнă?

– Машăна мĕнле чашăкри яшка килĕшнĕ?

– Сĕтел патĕнче мĕнле тенкелсем пулнă? Пысăк тенкел мĕнĕн пулнă? Мишуткăн тенкелĕ мĕнле пулнă: пысăк-и, пĕчĕк-и? Мĕнĕн тенкелĕ çĕмĕрĕлнĕ?

– Хĕр ача тепĕр пӳлĕмре мĕн курнă?

– Пӳлĕмре миçе кравать пулнă? Машăна хăш кравачĕ килĕшнĕ?

– Упасем килсен мĕн каланă? Пысăк упа мĕн каланă? Вăтамраххи мĕнле çухăрнă? Мишуткăн сасси мĕнле пулнă?

– Упасем хĕр ачана ăçта курнă? Вĕсем мĕнле кăшкăрнине калăр.

– Маша упасенчен мĕнле тарма пултарнă?

В о с п и т а т е л ь. Сире Мишутка илсе килнĕ кĕнекесем килĕшрĕç-и? Мишутка, тавах. Эпир сана выляма чĕнетпĕр.

*2-мĕш вăйă*

**Ачасем кубиксемпе выляççĕ**

**Тĕллевсем**: ачасене сюжетлă картинăсене сăнама вĕрентесси; *аялта, çӳлте* сăмахсен пĕлтерĕшĕпе малалла ĕçлеттересси; курни çинчен каласа пама, ыйтусене хуравлама хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Сĕтел çинче çурт-йĕр ăсталамалли формăсем: кубсем, кирпĕчсем, хапхасем (аркăсем). Воспитатель ачасене «Ачасем кубиксемпе выляççĕ» картинăна (авторĕсем Е. Радина, В. Езикеева) сăнама сĕнет. Картинăра мĕн ӳкернине каласа парать.



В о с п и т а т е л ь. Хĕр ача пысăк та хитре хапха тунă. Настя, хĕр ача ăсталанă хапхана кăтарт-ха. Ку хапха сире килĕшет-и? Çакăн пек хапха ăсталатпăр. Хапхан çӳлти пайĕ хĕрлĕ тĕслĕ, аялти пайĕ вара сарă. Хапха мĕн тĕслĕ?

А ч а с е м (*ушкăнпа тата пĕчченшерĕн*). Хапхан çӳлти пайĕ хĕрлĕ тĕслĕ, аялти пайĕ вара сарă т. ыт. те.

В о с п и т а т е л ь. Арçын ача мĕн купалать?

А ч а. Арçын ача башня тăвать.

В о с п и т а т е л ь. Йăрăмлă кĕпе тăхăннă арçын ача мĕн турттарать? Ăна кубиксем мĕн тума кирлĕ? Кубиксемпе выляма лайăх-и? Картинăра тата мĕн куратăр?

Ачасем хуравлаççĕ. Воспитатель ачасен хуравĕсене пĕтĕмлетет, вĕсене мухтать.

В о с п и т а т е л ь. Кубиксемпе выляма лайăх. Хура йĕм тăхăннă арçын ача *çӳллĕ башня* тăвать. Башня хитре пулчĕ! Башньăн аялти пайĕ *сарă*, тăрри шĕвĕркке, *хĕрлĕ* тĕслĕ. Хĕр ача арçын ачана *пулăшать.* Вăл *хапха тăвать.* Йăрăмлă кĕпеллĕ арçын ача – *шофер.* «Ту-тут! – кăшкăртать. – Эпĕ *кубик илсе килтĕм*», – тет ачасене.

Воспитатель калава тепĕр хут вулать, паллă тунă сăмахсене калама хистет.
Ун хыççăн воспитатель ачасене картинăна тепĕр хут сăнама чĕнет. Ачасем картинăри пек башньăпа хапха ăсталама тăрăшнишĕн мухтать.
**«Асамлă хутаç» вăйă**.

В о с п и т а т е л ь. Ту-ту-тут! Шофер пирĕн пата кубик кăна мар, асамлă хутаç та илсе килнĕ. Хутаçра мĕн пур, сирĕн пĕлес килет-и? (*Ачасен хуравĕсем.*) Хутаçра фигурăсем. Маша, аллуна хутаçа чиксе пĕрне ил. Сан аллунта мĕн (мĕнле фигура)? (*Кубик.*) Халĕ хутаçран кăларса пăхатпăр. Вăл мĕн тĕслĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*) Миша, хутаçран терĕр фигура ил. Ку мĕн? (*Шар.*) Шар мĕнле? (*Çаврака.*)

Вăййа пур ачана та хутшăнтарма тăрăшмалла.

*3-мĕш вăйă*

## Хăйăр купи çинче

**Тĕллевсем**: ачасемпе *пысăк, пĕчĕк, нумай, çӳлте, вĕтĕ* сăмахсен пĕлтерĕшĕпе малалла ĕçлесси; сюжетлă картинăна тишкерме вĕрентесси; воспитатель ыйтăвĕсене хуравлама хăнăхтарасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель ачасем пурте хăйăрпа выляма юратни çинчен калать.
Хăйăра чавма, витрене яма, унран «кукăльсем» тума пулнине аса илтерет.



В о с п и т а т е л ь. Сире хӑйӑр купи ҫинче выляма юратакан ачасене кӑтартам-и?

Вӑл ачасене ӳкерчӗке тимлӗ пӑхма, унта мӗн курнине пӗр-пӗрин хушшинче сӳтсе явма вӑхӑт парать.

В о с п и т а т е л ь. Куратӑр-и, хӑйӑр купи мӗнле пысӑк?! Купара хӑйӑр нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Хӑйӑр мӗн тӗслӗ?

А ч а с е м. Сарӑ.

В о с п и т а т е л ь. Тем пысӑкӑш купа, ҫӳлте (хӑйӑр ҫинче) мӗн пур?

А ч а с е м. Машина. Йӑрӑмлӑ машина.

В о с п и т а т е л ь. Ҫак машина камӑн-ши, эсир мӗнле шутлатӑр? Эпӗ те ҫак машина хура ҫӳҫлӗ, аллинче кӑвак савуклӑ арҫын ачан тесе шутлатӑп. Хура ҫӳҫлӗ арҫын ача... (*симӗс машинӑпа вылякан арҫын ачапа*) калаҫать. Интереслӗ, мӗн ҫинчен калаҫса татӑлчӗҫ-ши вӗсем? (*Воспитатель ачасен хуравӗсене итлет, ҫирӗплетсе хӑварать.*) *Хӗрлӗ* кӗпеллӗ хӗр ача хӑйӑр купи ҫинче мӗн тӑвать?

А ч а с е м. Вӑл хӑйӑр купин пӗр енне вӗтӗ, тӗрлӗ тӗслӗ теттесемпе хитрелетет. Хӗр ача кукӑльсем тӑвать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасене хӑйӑр купи ҫинче выляма килӗшет-и? Вӗсем кӑмӑллӑ-и?

А ч а с е м. Кӑмӑллӑ, ачасем йӑл кулаҫҫӗ.

Занятие ҫакӑн пек калавпа вӗҫлеме пулать: «Хӑйӑр купи ҫинче выляма лайӑх, интереслӗ. Купа пысӑк, хӗррисем унӑн сарлака, хӑйӑрӗ сарӑ, таса. Арҫын ачасем хӑйӑр купи ҫинче машинӑпа выляҫҫӗ, купан тӗрлӗ енне вырнаҫнӑ. Пӗр-пӗрин патне хӑнана ҫӳрес тесе вӗсем туннель чавма калаҫса татӑлаҫҫӗ. Хӗрлӗ кӗпеллӗ хитре хӗр ача «кукӑль» пӗҫерет. Вӑл ачасене «кукӑльсене» тутанма чӗнет.

*4-мӗш вӑйӑ*

### Эпӗ мӗн тӑватӑп?

**Тӗллевсем**: ачасен пуплевне хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем кӗртесси; кӗнекери ӳкерчӗксене сӑнама, курнине сӑмахпа калама хӑнӑхтарасси.

В ӑ й ӑ   й ӗ р к и

Воспитатель сӗтел ҫине пысӑк тата пӗчӗк кӗнекесем хурать. Пысӑк кӗнекери ӳкерчӗксем пысӑк, пӗчӗк кӗнекерисем пӗчӗк пулмалла.

В о с п и т а т е л ь. Сӗтел ҫинче мӗн выртать? Кӗнекесем пысӑк-и е пӗчӗк-и? (*Кӗнекесене уҫса пӑхаҫҫӗ.*) Пысӑк кӗнекери ӳкерчӗксем мӗнле? Пӗчӗк кӗнекери ӳкерчӗксем мӗнле?

А ч а с е м. Пысăк кĕнекере пысăк ӳкерчĕксем, пĕчĕк кĕнекере пĕчĕк ӳкерчĕксем.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк кĕнекере мĕн ӳкернĕ? Пĕчĕк кĕнекере мĕн ӳкернĕ? Мĕн ӳкернине веçех курас тесен ӳкерчĕке тимлĕ сăнамалла. (*Унтан воспитатель ачасене чи пысăк ӳкерчĕке кăтартса вĕсем мĕн курнине сăнласа пама ыйтать.*)

**«Эпĕ мĕн тăватăп?» вăйă.**

Воспитатель хăй мĕн тунине калама ыйтать:

1) кĕнекене уçать тата… (хупать);
2) хăйăва çыхать тата… (салтать);
3) тӳмене тӳмелет тата… (вĕçертет);
4) стакана шыв тултарать (ярать) тата… (тăкать);
5) пирамидка çĕррине хывать (кăларса илет) тата… (тăхăнать).

Малалла ачасем воспитатель ыйтнипе хусканусем тăваççĕ: лараççĕ – тăраççĕ, шариксем илеççĕ – каялла хураççĕ, чупаççĕ – чарăнса тăраççĕ т. ыт. те.

Çавăн пекех «Пысăк – пĕчĕк», «Сарлака – ансăр» вăйăсем выляма пулать.

*5-мĕш вăйă*

## Хурсем

**Тĕллевсем**: ачасене калава итлесе ăнланма хăнăхтарасси; ачасен пуплевне *хур, хур чĕппи* сăмахсем кĕртесси.

В ă й ă  й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь (*хур ӳкерчĕкĕ кăтартса*). Ку мĕнле кайăк? Хур вăрăм мăйлă, хĕрлĕ сăмсаллă, хĕрлĕ уараллă пысăк кайăк. Ку (*ӳкерчĕк кăтартса*) хур чĕппи. Хурсене тики-тики-тики! тесе йыхăраççĕ. Хурсене çапла чĕнсен вĕсем килĕç, эпир вара вĕсене çăкăр татăкĕ е симĕс курăк парăпăр. Хурсене чĕнсе илер-ха, вĕсен апат çиме вăхăт çитнĕ.

А ч а с е м. Тики-тики-тики!

5–6 ача черетпе хур чĕппине йыхăрать. Хур чĕппи вĕсем патне пырать, алă тупанĕ çинчи апатне сăхать. Ӳкерчĕке пуçтарса хурсан воспитатель ачасене К. Ушинский хур çинчен çырнă калавне итлеме сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Кил хуçи урама тухрĕ те хурсене киле йыхăрать: «Тики-тики-тики! Шурă хурсем, сăрă хурсем, киле килме вăхăт çитнĕ!» – тет. Хурсем вăрăм мăйĕсене тăснă, хĕрлĕ урисемпе тăпăртатаççĕ, çуначĕсене сулласçĕ, сăмсисене карнă: «Ка-ка-ка! Халех киле кайма кăмăл çук!» – теççĕ.

Калава пайӑн-пайӑн вулать, виҫҫӗмӗшӗнче – туллин.

В о с п и т а т е л ь. Кил хуҫи урама тухрӗ те хурсене киле йыхӑрчӗ: «Тики-тики-тики! Шурӑ хурсем, сӑрӑ хурсем, киле килме вӑхӑт ҫитнӗ!». Хурсем вӑрӑм мӑйӗсене тӑснӑ, хӗрлӗ урисемпе тӑпӑртатаҫҫӗ, ҫуначӗсене сулаҫҫӗ, сӑмсисене карнӑ: «Ка-ка-ка! Киле кайма кӑмӑл ҫук! Пире кунта та аван!» – теҫҫӗ. Кил хуҫи хурсене ырӑпа чӗнсе илме май ҫуккине кура хулӑ илсе килелле хӑваласа кайрӗ.

Воспитатель ачасенчен кил хуҫи хурсене мӗнле чӗннине ыйтса пӗлет, унтан хурсем мӗн хуравланине ыйтать. Ачасене хуравлама пулӑшать.

Юлашкинчен **«Кил хуҫипе хурсем»** вӑйӑ выляҫҫӗ.

Пӗр ача кил хуҫи пулать, вӑл хурсене киле килме чӗнет: «Тики-тики-тики!» – тет. Ытти ачасем хурсем пулаҫҫӗ. «Ка-ка-ка! Халех киле кайма кӑмӑл ҫук! Пире кунта та аван!» – теҫҫӗ.

*6-мӗш вӑйӑ*

## Машинӑпа ярӑнар-и?

**Тӗллевсем**: ачасен пуплевне аталантарасси; [э] сасса тӗрӗс калама вӗрентесси; *эй* междометие тӗрӗс калаттарасси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Воспитатель ачасем умне уҫӑлакан кузовлӑ пысӑк машина лартать. Машинӑран инҫех мар тӗрлӗ тӗлте теттесем вырнаҫтарать: пакша ҫури, упа ҫури, мулкач ҫури, чӗрӗп чӗппи. Ачасем чӗр чунсене каласа тухаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Машина ҫул ҫинче тӑрать. Хӑй кӑвак тӗслӗ, кузовӗ вара (*кӑтартать*) сарӑ, урапиcем (*кӑтартать*) хӗрлӗ тӗслӗ. Хитре машина! Тискер чӗр чунсем ӑна курчӗҫ те чарӑнчӗҫ, пӑхаҫҫӗ. (*Ачасем машинӑна сӑнлаҫҫӗ.*) Пакша ҫури ҫывӑха чупса пычӗ, кузов ӑшне пӑхрӗ. Никам та ҫук! Пакша ҫури машина ҫине ларсан вӑл тапранса кайрӗ.

«Эй, эй! Кӑвак машина, мана кӗт! – тесе кӑшкӑрать мулкач ҫури. – Эй, эй! Кӗтсе тӑр!». Машина ӑна илтмест. Мулкач ҫурине пулӑшмалла.

А ч а с е м. Эй, эй! Кӑвак машина, кӗт!

В о с п и т а т е л ь. Эсир мулкач ҫурине пулӑшрӑр, асамлӑ машина – вӑл шофӗрсӑр ҫӳреме пултарать – каялла таврӑнчӗ. Чӗр чун кузов ҫине хӑпарса ларсан машина вырӑнтан хускалчӗ. Чӗрӗп чӗппи те чупса килчӗ: «Эй, эй, кӗтсе тӑр!» – тесе кӑшкӑрчӗ. Чӗрӗп чӗппи мӗн тесе кӑшкӑрчӗ?

А ч а с е м. Эй, эй, кӗтсе тӑр!

В о с п и т а т е л ь. Вӑл та кузов ҫине ларчӗ. Машина кайрӗ. Упа ҫу-

ри темшĕн кая юлчĕ. Вăл кӳренчĕ, макăрса ячĕ: «Э-э-э, э-э-э!». Вăл мĕнле макăрать?

А ч а с е м. Э-э-э, э-э-э!

В о с п и т а т е л ь. Айтăр ăна йăпатса çапла калар: «Ан макăр, асамлă машина каялла таврăнать».

А ч а с е м (*ушкăнпа тата пĕчченшерĕн*). Ан макăр, асамлă машина каялла таврăнать.

В о с п и т а т е л ь. Машина таврăнчĕ. Упа çури кузов çине хăпарса ларчĕ те, машина унталла-кунталла, унталла-кунталла, малалла-каялла, малалла-каялла çӳреме пуçларĕ.

А ч а с е м *(воспитатель хыççăн сăмахсем калаççĕ*). Унталла-кунталла, унталла-кунталла, малалла-каялла, малалла-каялла.

В о с п и т а т е л ь. Чĕр чунсем ярăнса ывăнчĕç. Машина çинчен пакша çури пĕрремĕш сиксе анчĕ. Ун хыççăн – мулкач çури. Кайран – упа çури. Чĕрĕп чĕппи, сикме пĕлменскер, машина çинчен ниепле те анаймарĕ. Макăрса ярас пек ларать. Упа çури каялла таврăнса чĕрĕп чĕппине тяппине пачĕ. Ак çапла (*кăтартать*). Чĕр чунсем, çынсем пĕр-пĕрне яланах пулăшаççĕ.

Чĕр чунсем машина çинчен ансанах вăл тапранса кайрĕ. Чĕр чунсем машина кайнине пăхса юлчĕç. «Кăвак машина, чипер кай! Тавах сана!» – сасартăк кăшкăрса ячĕ мулкач çури. Ытти чĕр чунсем ăна пулăшрĕç. Чĕр чунсем мĕн тесе кăшкăрчĕç?

А ч а с е м. Кăвак машина, чипер кай! Тавах сана! – терĕç.

В о с п и т а т е л ь. «Пипи-ик!» – илтĕнчĕ аякран. Машина чĕр чунсемпе сывпуллашрĕ. Машина мĕнле сывпуллашрĕ?

А ч а с е м. Пипи-ик! терĕ.

***Асăрхаттарни***. Заняти хыççăн е пушă вăхăтра «Асамлă машина» вăййа выляма юрать. Теттесем калăпăшĕпе машина кузовне вырнаçаканнисем пулмалла. Ачасем вылянă май машинăпа калаçаççĕ, чĕр чунсене ярăнтарма ыйтаççĕ.

*7-мĕш вăйă*

## Кушак, пирĕн патран ан кай!

**Тĕллевсем**: ачасене хăйсем тĕллĕн теттесемпе выляма тата калаçма хăнăхтарасси; воспитатель мĕн ыйтнине тума вĕрентесси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель аллине кушак тетте тытнă, ăна ачашласа тăрать. Кушак ачасене кӳреннине пĕлтерет, мĕншĕн тесен вĕсем ăна сĕтпе яшка пама манса кайнă.

В о с п и т а т е л ь. Паян пирĕн пата кушак килнĕ. Анчах та вăл кăмăлсăр. Унăн ачашланас, выляс килет. Кушак урăх ушкăна каясшăн. Ачасем, кушака хамăр патра юлма ыйтар-и? (*Ачасен хуравĕсем.*)

Кушак пукан çинче ларать, ачасем пĕрерĕн кушак патне пыраççĕ, унпа калаçаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кушакăм, эпĕ сана валли сĕт илсе килтĕм.
К у ш а к. Мăр-р! Тавах.
1-м ĕ ш а ч а. Сана валли какай илсе килтĕм. Питĕ тутлă вăл.
2-м ĕ ш а ч а. Эсĕ питĕ илемлĕ. Эпĕ сана юрататăп.
3-м ĕ ш а ч а. Эпĕ санпа вылятăп.

Малтан воспитатель ачасене кушака мĕн сĕнме пултарнине калама пулăшать. Кайран ачасем хăйсем тĕллĕн кушака ырă сăмахсем калаççĕ, ăна хăюпа выляттараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кушак питĕ ывăнчĕ, ăна çывăрма вырттарăпăр. Сăпка юрри юрлатпăр.

Ачине – паппине,
Ачи паппа тутăр-и,
Тутлă тĕлĕк куртăр-и?
Ă-ă-ă, ă-ă-ă.

Тутă, кăмăлĕ тулнă кушак çывăрса каять.
Воспитатель ачасене Е. Рдюкова çырнă «Мăр-мăрăлкка шур кушак...» сăвва вуласа парать.

Мăр-мăрăлкка шур кушак,
Тяпписенче çăм пушмак.
Мăр-мăрăлкка мăрлатать,
Хăй хуçине юратать.

В о с п и т а т е л ь. Мăр-мăрăлкка мĕн тĕслĕ? Тяппине мĕн тăхăннă? Кушак хуçине юратать-и? Мĕншĕн юратать?

*8-мĕш вăйă*

**Упа çурине савăнтарма пулать-и?**

**Тĕллевсем**: ачасене теттепе тĕрлĕрен калаçма, выляма вĕрентесси, мĕн тунине предложенипе калама хăнăхтарасси, ăшă кăмăллă пулма хавхалантарасси.

В ă й ă й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ĕнер эпир сирĕнпе кушакпа вылянăччĕ. Çакна упа çури курнă. Вăл паян пирĕн пата килчĕ. Упа çури те хăйне юратта-

расшăн, хăналаттарасшăн, пирĕнпе вылясшăн. Эсир килĕшетĕр-и? «Упа çури, кил пирĕнпе выляма!» – тесе чĕнетпĕр.

А ч а с е м. Упа çури, кил пирĕнпе выляма.

В о с п и т а т е л ь. Упа çури хитре, çемçе. Вăл çырла, пыл, пан улми çиме юратать. Ăна хăналатпăр-и? Таня, упа çурине пан улмипе хăнала. «Мишутка, эпĕ сана пан улмипе хăналатăп», – тесе кала.

Т а н я. Мишутка, эпĕ сана пан улмипе хăналатăп.

У п а  ç у р и. Тавах.

В о с п и т а т е л ь. Дима, «Мишенька, манăн сан валли пыл пур. Акă, ил», – тесе савăнтар.

В о с п и т а т е л ь. Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ пан улми?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Лена, пĕр пан улмине ил те упа çурине пар. Лена, эсĕ мĕн тĕслĕ пан улми илтĕн?

Л е н а. Симĕс пан улми илтĕм.

В о с п и т а т е л ь. «Мишка, эпĕ сана симĕс пан улми паратăп», – тесе кала.

Ачасем черетпе упа çури патне пыраççĕ, унпа калаçаççĕ, ăна хăналаççĕ. Енчен те ачасем пĕр-пĕринчен курса упа çурине пĕр пек чĕнсе каласан воспитатель вĕсене урăхла тĕслĕхсем тупма пулăшать.

Ачасене упа çури вĕсенчен ырă сăмахсем кĕтнине аса илтерсех тăмалла.

**«Пытанмалла» вăйă**. Упа çури пытанать, ачасем ăна тупаççĕ.

# АКА УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТӲЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**Хăнасене хапăл-и?**

**Тĕллевсем**: ачасене теттесене уйăрма, вĕсемпе выляма вĕрентесси; мĕн тунине предложенипе калама хăнăхтарасси; ăшă кăмăллă пулма хавхалантарасси.

В ă й ă й ĕ р к и

Воспитатель ачасене Н. Васильев çырнă «Куянпа чĕрĕп» сăвва вуласа парать.

В о с п и т а т е л ь. Куян хăйĕн тусĕнчен
Кулса ыйтнă пĕринче:
– Каласамччĕ, тусăм чĕрĕп:
Ма ӳстернĕ эсĕ чĕр йĕп?
Чĕрĕп лăпкăн, юлташла
Хуравланă ак çапла:
– Йĕплĕ эпĕ ачаран
Тăшман шăллă пулнăран.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, упа çурине пирĕн патра питĕ килĕшнĕ, паян вăл хăйпе пĕрле юлташĕсене илсе килнĕ. Вĕсене паллатăр-и эсир?

А ч а с е м. Кусем чĕрĕп тата мулкач.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр вĕсене пĕрле выляма чĕнетпĕр.

А ч а с е м. Упа, кил пирĕнпе выляма.
– Мулкач, кил пирĕнпе выляма.
– Чĕрĕп, кил пирĕнпе выляма.

В о с п и т а т е л ь. Чĕрĕп йĕплĕ пулин те питĕ ырă кăмăллă. Вăл кăмпа, пан улми çиме юрататать. Ăна хăналатпăр-и? Таня, чĕрĕпе кăмпапа хăнала. «Чĕрĕп тус, эпĕ сана кăмпапа хăналатăп», – тесе кала.

Т а н я. Чĕрĕп тус, эпĕ сана кăмпапа хăналатăп.

Ч ĕ р ĕ п. Тавах.

Воспитатель ачасене çавăн пекех мулкачпа, упапа выляттарать.

В о с п и т а т е л ь. Апат çисен вăхăтра апат усси пысăкрах. Атьăр-ха чĕр чунсене сĕтел хушшине лартар.

Чĕр чунсене сĕтел хушшине лартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кăмпапа кама хăналар?

А ч а с е м. Чĕрĕп кăмпа юрататъ.

В о с п и т а т е л ь. Чĕрĕпĕн тарăн чашăкне кăмпа хурар-и?

А ч а с е м. Чĕрĕпĕн тарăн чашăкне кăмпа хуратпăр.

Воспитатель ачасене çавăн пекех мулкача, упана хăналама ыйтать, *тарăн, ăшăх* сăмахсемпе усă курма калать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чĕр чунсем сире мĕн калаççĕ-ши?

Ч ĕ р ĕ п. Тавтапуç, ачасем, кăмпа питĕ тутлă пулчĕ.

А ч а с е м. Пысăк ӳсĕр, маттур пулăр!

М у л к а ч. Тавтапуç, ачасем, кишĕр питĕ тутлă. Эпĕ сирĕнпе вăййă выляс-шăн. Атьăр пĕрле выляр!

«Мулкач» сăвва каланă май хусканусем тăваççĕ.

**Мулкач**

Мулкач ларать пашкаса,
Ик хăлхине вылятса.
Ак çапла, ак çапла
Ик хăлхине вылятса.
Вăл пуçларĕ ташлама,
Сивĕрех ăна тăма.
Ак çапла, ак çапла
Вăл пуçларĕ ташлама.

Ч ĕ р ч у н с е м. Тавтапуç, ачасем, эсир питĕ маттур! Сирĕн пата хăна-на эпир татах та килĕпĕр!

*2-мĕш вăййă*

**Машăпа упа**

**Тĕллевсем**: ачасене юмахри ӳкерчĕк тăрăх калаçма хăнăхтарасси; «Машăпа упа» юмахăн пĕр пайне рольпе выляма хавхалантарасси.

**Кӳртĕм ĕç**: юмаха вуланă хыççăн воспитатель ачасене ун тăрăх ӳкернĕ кĕнекесем кăтартать. Ачасене ӳкерчĕке сăнама калать, кама хăш ӳкерчĕк килĕшнине ыйтса пĕлет.

В ă й ă й ĕ р к и

Вĕрентекен ачасенчен юмах тăрăх ӳкернĕ хăш ӳкерчĕк кăмăла кайни çинчен ыйтса пĕлет.

В о с п и т а т е л ь. Мана та ку ӳкерчĕксем килĕшеççĕ. Çак ӳкерчĕкре

пысăк упа тĕлĕнсе тăрать. Маша аякра пулсан та веçех курать. Епле тимлĕ ку хĕр ача. Çӳлте ларать, аякра курать.

Воспитатель ачасене юмаха аса илме пулăшать.

В о с п и т а т е л ь. Пĕчĕк хĕр ача упа хăйĕн килне таврăнсан унтан хăранă-ши? (*Çак самантра вуласа парать.*)

Маша упана мĕнле улталанă-ши?

Воспитатель ачасене выляма ыйтать. Вăл пĕр арçын ачана упа пулма, хĕр ачана Маша пулма суйлать.

В о с п и т а т е л ь. Упа карçинккана çурăм çине çĕклесе лартать те ялалла утать. Утсан-утсан ывăнать те:

– Тунката çине ларам, пĕр кукăльне çием! – тет.

В о с п и т а т е л ь. Хĕр ача карçинкка ăшĕнчен мĕн калать?

Х ĕ р а ч а (*Маша рольне вылякан ача упа хыçĕнче утса пырса*). Куратăп, куратăп. Тунката çине ан лар, кукăльне ан çи!

Вăййа 2–3 хутчен выляма юрать.

**«Упа утаман» хускануллă вăйă.**

**Упа**

Эпĕ упа утаман,
Ик урапа утакан,
Пур кайăкран хытăрах
Мĕкĕрттерсе улакан.
Çăва тухсан – вăрманта
Вĕллесене ватакан,
Тутлă пылне çиекен,
Ĕнесене тытакан.
Хĕл сиввинчен хăраса
Пурăнатăп шăтăкра,
Ура тупань çуласа
Вилнĕ пекех çывратăп.

*Н. Шелепи*

*3-мӗш вӑййӑ*

**Ҫӗнӗ теттепе выляр-и?**

**Тӗллевсем**: теттепе выляма кӑсӑклантарнӑ май ачасен пуплевне аталантарасси; калаҫура глаголсене тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси; пӗр-пӗринпе туслӑ выляма хавхалантарасси.

В ӑ й ӑ  й ӗ р к и

Воспитатель ачасене икӗ ушкӑна пайлать. Пӗр ушкӑнра хӗр ачасем, тепринче – арҫын ачасем. Воспитатель хӗр ачасене ҫӗнӗ пуканепе паллаштарать, арҫын ачасене – ҫӗнӗ машинӑпа.

В о с п и т а т е л ь. Паян пирӗн патра хӑнара пукане тата машина. Пукане хӗр ачасемпе вылясшӑн, машина – арҫын ачасемпе. Хӗр ачасем, сирӗн ҫӗнӗ пуканепе выляс килет-и? Пуканене пирӗн патра лайӑх пулӗ-ши? Ӑна мӗнпе хӑналӑпӑр?

А ч а с е м (*воспитатель пулӑшнипе*). Апат ҫитерӗпӗр, ҫӳҫне турӑпӑр, ҫывӑрнӑ чух сӑпка юрри юрлӑпӑр, урама уҫӑлма илсе тухӑпӑр.

В о с п и т а т е л ь. Вӑл питӗ капӑр, хитре, ӑна ят парӑпӑр-и?

Ҫак тӗслӗхпе воспитатель арҫын ачасене калаҫтарать, вӗсем «машинӑна ватмастпӑр», «ӑна валли гараж ӑсталӑпӑр», «ҫӑвӑпӑр», «юсӑпӑр» теҫҫӗ.
Воспитатель Уйӑп Мишшин «Теттесем»» сӑввине вуласа парать, калаҫу irттерет.

**Теттесем**

Пӗчӗк Петӗр тантӑшне
Вӑййӑ выляма чӗнет:
– Кил, – тет, – Сантӑр, выляма,
Манӑн теттесем нумай.
Ку – машина, ун ҫине
Эп тиеп теттесене.
Турттаратӑп алӑкран
Пуҫласа тӗпел таран.
Ку ак самолёт, хитре
Ярӑнать вӑл пӗлӗтре.
Ку шӑхличӗ, шӑхӑрать,
Шӑхӑртса пӑх, ан хӑра…

В о с п и т а т е л ь. Петӗрӗн теттесем мӗн чухлӗ? Унӑн мӗн пур? Теттесемпе выляма кама чӗнет? Петӗр теттесемпе мӗнле вылять?

А ч а с е м. Нумай. Машина, самолет, шӑхличӗ.

В о с п и т а т е л ь. Петӗрӗн тетте нумай. Вӑл машина ҫине теттесем

тиесе турттарать, самолёта пĕлĕтре вĕçтерет, шăхличпе шăхăрса пăхать. Петĕр хăйĕн юлташне Сантăра выляма чĕнет. Тантăшне хăйĕн теттисемпе выляма сĕнет.

Воспитатель ачасене пĕр-пĕринпе туслă вылямалли пирки калать.

*4-мĕш вăйă*

**Сан юлташу пулам-и?**

**Тĕллевсем**: каласа, вуласа панине итлеме, итленине астуса юлма, каласа пама хăнăхтарасси; чĕр чунсене шеллеме вĕрентесси.

В ă й ă   й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир сирĕнпе паян тетте лавккине килтĕмĕр. Пăхăр-ха, мĕн чухлĕ тетте кунта! Лавккара кам мĕн туянать? Саша, эсĕ мĕн-мĕн туянасшăн?

С а ш а. Эпĕ пăравус туянатăп.

Воспитатель ачасене тетте лавккинче мĕн туянма пултарнипе кăсăклантарать, теттесемпе мĕнле вылямалли çинчен калаçу ирттерет. Унтан Ч. Янчарский çырнă «Тетте лавккинче» юмах тăрăх çырнă калава вулать.

В о с п и т а т е л ь. Эсир туяннă теттесемпе мĕнле вылятăр? Юлташăрсене выляма паратăр-и? Теттесене сирĕн патра лайăх-и? Вĕсем сирĕнпе вылясшăн-и?

**Тетте лавккинче**

Пĕр тетте лавккинче плюш упа çурисем сутнă. Анчах та кĕтесре ларакан упа çури çине никам та пăхман, ăна питĕ кичем пулнă. Ытти упа çурисене ачасем туянса киле илсе кайнă ентĕ, ку упа çури кĕтесре пĕчченех ларнă.

Упа çурине питĕ кичем пулнă, унăн ачасемпе выляс килнĕ. Куляннипе упа çурин пĕр хăлхи усăнсах аннă. «Юмах итлесен те пĕр хăлхаран кĕрет те тепринчен тухса каяймасть. Усăнса аннă халха ăна кăларса ямасть», – тесе лăплантарнă вăл хăйне.

Пĕррехинче упа çури хăй ларакан çӳлĕк çинче хĕрлĕ зонт выртнине курать. Вăл зонта тяппипе тытса уçать те аялалла пĕр хăрамасăр сиксе анать. Лавккаран урама тухать. Урамра питĕ нумай çын пулнипе вăл хăраса каять. Икĕ арçын ача – Зосьăпа Яцек – упа çури çине ăшă кулăпа пăхаççĕ, ун патне пыраççĕ.

– Упа çури, эсĕ кама шыратăн?

– Эпĕ юлташсем шыратăп.

– Упа çури, пирĕнпе пыратăн-и? Эпир санăн юлташусем пулатпăр.
– Пыратăп. Тавах.

Ачасем упа çурине килне илсе каяççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Упа çури çинчен мĕн пĕлтĕр? (*Ачасен хуравĕсем.*)
В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ушкăнри упа çури те юлташсем шырать. Упа туспа вăйă выляса илер-и, ачасем?

**«Упа, упа утаман» хусканullă вăйă**

Упа, упа утаман –
Ик урапа утакан,
Ачасене тытакан.

Упа хăвалать, ачасем тараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Сире упа çурипе выляма килĕшрĕ-и? Упа çури пирĕн юлташ пултăр-и? (*Ачасен хуравĕсем.*)
У п а  ç у р и. Тавтапуç сире, ачасем. Халĕ манăн та юлташсем пур.

*5-мĕш вăйă*

## Килти выльăх-чĕрлĕх

**Тĕллевсем**: ачасене чĕр чунсен тата вĕсен çурисен хушшинчи уйрăмлăхсене курма, каласа пама вĕрентесси; ачасен тимлĕхне аталантарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель ачасене черетпе «Килти выльăх-чĕрлĕх» картинăсен ярăмне (авторĕ С. Веретенникова) кăтартать: «Ĕнепе пăру», «Качакапа путеккисем».

В о с п и т а т е л ь. Ĕне пысăк, пăру пĕчĕккĕ. Ĕнен мăйраки пур, вăл сĕкме пултарать. Пăрăвăн вара мăйраки ӳсмен-ха (е вĕсем пĕчĕккĕ). Ĕне хытă макăрать: «М-му-у-у-у!». Ĕне мĕнле сас парать?
А ч а с е м (*пĕрле е пĕчченшерĕн ĕне пек сас парса*). М-му-у-у-у!

Çавăн пекех качакапа путеккисене сăнлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Качака пысăк. Унăн мăйраки вăрăм, сухалĕ те пур. Путексен вара мăйракисем пĕчĕккĕ, аран курăнаççĕ. Вĕсем алхасма, выляма юратаççĕ. «Ме-е!» – чĕнет качака путеккисене (*хулăн, хытă сасăпа калать*). «Ме-е!» – хуравлаççĕ путексем (*çинçе саспа, шăппăнрах каламалла*).
В о с п и т а т е л ь (*картинăсене илсе хурать, ĕне, пăру, качака, путек, тиха теттесем лартать).* Картинăсенче мĕнле чĕр чуна тĕл пулмарăмăр?

Кама хăш чĕр чун килĕшет? Мана тиха кăмăла кайрĕ. Эпĕ ун çинчен сăвă та пĕлетĕп.

Воспитатель А. Ильин çырнă сăвва вулать.

**Тиха**

Кунĕпех çаран çинче
Эрнери тиха çӳрет,
Ешĕл курăк хушшинче
Вĕлт те вĕлт! вăл сиккелет.

В о с п и т а т е л ь. Тиха мĕнле сиккелет?

А ч а с е м (*сиксе кăтартса*). Вĕлт-вĕлт! сикет.

Педагог ачасене «Мĕн çухалчĕ?» вăйă выляма чĕнет. Ачасем кусĕсене хупсан воспитатель пĕр теттине пытарать. Ачасем кусĕсене уçсан мĕн çухалнине калаççĕ. «Ĕне ăçта кайрĕ-ши?» – ыйтать воспитатель. (*Уя курăк çиме кайрĕ.*) Педагог вăййа ытти теттесемпе те ирттерет.

Теттесене пуçтарса хурсан мольберт çине «Лашапа тиха» картина лартать, ачасене хăйсене тĕллĕн сăнама хистет.

*6-мĕш вăйă*

**Катя пуканене çăвăнтарни**

**Тĕллевсем**: ачасене япала ячĕсене, паллă ячĕсене, глаголсене астуса юлма, *савăт, супăнь, пит шăлли, супăньлĕ, çуса яр, типĕт, вĕри, сивĕ, ăшă шыв* сăмахсемпе калаçура тĕрĕс усă курма вĕрентесси, пуканепе выляма май пулнине кăтартасси.

В ă й ă   й ĕ р к и

Воспитатель сĕтел çине шыв тултарнă савăт лартать, унпа юнашар икĕ витре тата курка хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, паян эпир сирĕнпе Катьăна çăвăнтаратпăр. Хĕр ачана мĕнле шывра çăватпăр? (*Ăшă шывра.*)

Педагог ачасене савăтри шыв мĕнле пулнине тĕрĕслеме сĕнет. Пуканене илет те хывăнтарса шыва лартать. Пĕр ачине супăнь пама ыйтать (кирлĕ хатĕрсем юнашар сĕтел çинче выртаççĕ).

Воспитатель ачасене мунчала илсе килме ыйтать, ăна тытса пăхма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь (*пуканене çунă май*). Мунчала мĕн тума кирлĕ? (*Ачасен хуравĕсем.*) Пуканен пуçне мĕнпе çăватпăр? (*Супăньпе, шампуньпе.*)

Супăньпе сĕретпĕр
Пит-куçа çăватпăр.

В о с п и т а т е л ь. Сарă витрере вĕри шыв. Тытса пăхăр. Сарă витрери шыв мĕнле? (*Вĕри.*) *(2–3 ачаран витрери шыв мĕнле пулнине ыйтать.*) Кăвак витрере вара – сивĕ шыв. Кăвак витрери шыва тытса пăхăр. Эпĕ вĕри шывпа сивĕ шыва хутăштаратăп. Вара пирĕн шыв ăшă пулать. Çак ăшă шывпа Катьăна шыва кĕртетĕп. (*Пуканене çăвать.*)

Ăшă шыв яратпăр,
Çуса тасататпăр.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пит шăлли илсе килĕр. Пит шăллипе мĕн тăватпăр?

А ч а с е м. Пуканене типĕтетпĕр.

В о с п и т а т е л ь. Аня, пукане валли кĕпе илсе кил. Катьăна çывăрмалли кĕпе тăхăнтартатпăр. Çывăрма вырттаратпăр. Савăтри шыв супăньлĕ, таса мар. Ăна тăкмалла. (*Ачасем педагог хыççăн калаççĕ.*) Супăне хăй вырăнне хуратпăр, пит шăллипе мунчалана типме çакатпăр. Катьăна сăпка юрри юрласа çывăрма вырттаратпăр.

Пай, пай, паппа ту…
Аннӳ килсен тасатĕ,
Аçу килсен юратĕ,
Аппу килсен ачашлĕ.
Утьăкка, утьăкка!
Пай, пай, паппа ту!

Воспитатель хыççăн ачасем: «Утьăкка, утьăкка! Пай, пай, паппа ту!» – тесе калаççĕ.

*7-мĕш вăйă*

## Мĕне мĕнле чĕнеççĕ?

**Тĕллевсем**: евĕрлев сăмахĕсене калама хăнăхтарасси; ыйтнине тулли предложенипе хуравлама вĕрентесси; чĕр чунсем çинчен калаçма хавхалантарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель А. Хум çырнă «Мĕне мĕнле чĕнеççĕ?» сăвва вуласа парать.

– Пăç-пăç-пăç! тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ прис! тесе
Мĕне?
– Кушака.
– Кăть-кăть-кăть тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ кша! тесе

Мĕне?
– Чăхсене.
– Чух-чух-чух тесе чĕнеççĕ,
Хăвалаççĕ хаç! тесе
Мĕне?
– Сыснана.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, кушака апат çиме чĕннĕ чухне мĕн калатпăр? «Пăç-пăç-пăç! Кил апат çиме», – тетпĕр.

А ч а с е м. Пăç-пăç-пăç! Кил апат çиме.

В о с п и т а т е л ь. Кушак сĕтел çине хăпарсан мĕн калатпăр?

А ч а с е м. Прис! тесе калатпăр.

В о с п и т а т е л ь. «Сĕтел çине хăпарма юрамасть», – тетпĕр.

Ачасем воспитатель хыççăн тулли предложенипе калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кăть-кăть-кăть! тесе мĕне чĕнетпĕр? Кша! тесе чăхсене мĕншĕн хăвалатпăр?

А ч а с е м. Кша! Пахчана ан кĕрĕр!

В о с п и т а т е л ь. Чух-чух-чух! тесе мĕне чĕнетпĕр? Хаç! тесе сыснана мĕншĕн хăвалатпăр?

А ч а с е м. Сыснана. Çĕре ан чавала.

Ачасене «Чух-чух-чух, кил апат çиме», «Хаç! Çĕре ан чавала!» тесе калаттармалла.

*8-мĕш вăйă*

## Вĕреннине аса илни

**Тĕллевсем**: халиччен паллашнă юмахсене аса илме, вĕсене выляса кăтартма хавхалантарасси; юмахри сăнарсен кăмăлне хусканусемпе, интонаципе, мимикăпа палăртма вĕрентесси.

В ă й ă й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эсир мĕнле юмахсем астăватăр? «Уçăр, ачамсем, уçăр. Аннĕр вăрмантан таврăнчĕ» сăмахсене мĕн калать? Качака çак сăмахсене мĕне каланă? Ку сăмахсене хулăн сасăпа мĕн каланă? (*Хулăн сасăпа калать.*) Кашкăр качака путеккисем патне мĕн тума килнĕ? Качака путеккисене кашкăра алăк уçманнишĕн мĕнле мухтать? Вĕсене мĕн каланă? Мĕн ятлă юмаха аса илтĕмĕр?

Воспитатель сĕтел çине тĕрлĕ калăпăшлă виçĕ чашăк лартать.

В о с п и т а т е л ь. Ку чашăксем хăш юмахри сăнарсен-ши?

Воспитатель пӗр ачана чӗнсе кӑларать. Унпа пӗрле «Виҫӗ упа» юмахри сӑнарсен калаҫӑвне аса илет. Ҫак ӗҫе ытти ачасемпе те тӑвать. «Упапа хӗр ача» юмах кӗнекине е ӳкерчӗкне кӑтартать. Ачасем юмах ятне калаҫҫӗ.

Воспитатель хӑш юмахра упа тунката ҫине ларнӑ чух мӗнле сӑмахсем каланине, Маша карҫинккаран мӗн хуравланине аса илме ыйтать. Ачасене упапа хӗр ача калаҫӑвне выляса пама сӗнет.

У п а. Тунката ҫине ларам, пӗр кукӑльне ҫием!..
Х ӗ р  а ч а. Куратӑп, куратӑп! Тунката ҫине ан лар, кукӑльне ан ҫи!

Малалла «Керменкке» юмаха аса илсе выляма юрать. Ачасен пуҫӗсене сӑнарсене ӳкернӗ кӑшӑлсем тӑхӑнтарсан юмаха кӑтартма хаваслӑрах пулӗ.

Ку керменре кам пурӑнать?
– Эпӗ шӑпӑрҫӑ шӑна.
– Эсӗ мӗн?
– Эпӗ вӑрӑм туна.
– Эпӗ шӑши тус – хушка пуҫ.
– Эпӗ катӑк тута, ват шапа.
– Эпӗ мулкач, мул пухакан,
Сӑрт хӗрринче пурӑнакан.
– Эпӗ тилӗ, ват ӑста,
Сӑмах ҫапма пит ӑста.
– Эпӗ кашкӑр кашаман.
– Эпӗ упа утаман,
Ик урапа утакан!

# ÇУ УЙĂХĔНЧЕ ИРТТЕРМЕЛЛИ ВĔРЕНТŸЛЛĔ ВĂЙĂСЕМ

*1-мĕш вăйă*

**Кутăн хĕр ача**

**Тĕллевсем**: ачасене вуласа панине итлесе ăнланма, илтни çинчен каласа пама хăнăхтарасси; ачасенче пĕр-пĕрне пулăшас, хĕрхенес туйăм çуратасси.

В ă й ă й ĕ р к и

В о с п и т а т е л ь. Пирĕн ушкăнра макăракан, кутăнланакан ачасем пур-и?

А ч а с е м. Çук.

В о с п и т а т е л ь. Çук пулсан питĕ аван. Эпĕ пĕр кутăн хĕр ача çинчен сăвă пĕлетĕп. Итлесе пăхăр-ха. (*Вулать.*)

**Кутăн хĕр ача**

Галя вăранать те
Тек кутăнлашать:
– Туфли те, кĕпе те
Çук! – тет, макрашать.
Халь ак, тĕнче пĕтрĕ,
Вĕçĕмсĕр йĕрет:
– Лента таçта çĕтрĕ?! –
Тет вăл, хŭхлешет.
Мĕншĕн çухалаççĕ
Галя тумĕсем?
Мĕншĕн-ха тараççĕ
Ун япалисем?
Йĕнинчен хăраççĕ
Галя тумĕсем.
Çавăнпа тараççĕ
Ун япалисем.

*В. Дарда*

В о с п и т а т е л ь. Галя сире килĕшрĕ-и? Хĕр ачан япалисем мĕншĕн çук?

А ч а с е м. Вĕсем тарнă.

Воспитатель сăвва тепĕр хут вулать.

В о с п и т а т е л ь. Галя мĕн каласа макăрать? «Туфли те, кĕпе те çук! Лента таçта çĕтрĕ?!» – тет.

А ч а с е м. Туфли те, кĕпе те çук! Лента таçта çĕтрĕ?!

В о с п и т а т е л ь. Мĕнле шутлатăр, Галя мĕнле сасăсем кăларса макăрать-ши?

А ч а с е м. О-о-о-о, у-у-у-у, а-а-а-а.

В о с п и т а т е л ь. Гальăна лăплантарар-ха. «Галя, ан йĕр, лăплан, вара сан япалусем тармаççĕ», – тесе калар.

*2-мĕш вăйă*

**Ачасем чăхпа чĕпсене çитерни**

**Тĕллевсем**: ачасене картина сăнлама вĕрентесси; воспитатель ыйтăвĕсене хуравлама хăнăхтарасси; воспитательпе тантăшĕсем каласа панине итлеме вĕрентесси.



В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитатель «Ачасем чăхпа чĕпсене çитерни» картинăна пăхса сăнама сĕнет. Ачасем картина тăрăх мĕн каланине итлет. Арçын ачапа хĕр ача чăхпа чĕпсене апат панине пĕтĕмлетет.

В о с п и т а т е л ь. Тырă пĕрчисем ăçта выртаççĕ?

А ч а с е м. Чашăкра.

В о с п и т а т е л ь. Хĕр ача савăтран тырă мĕнле илнине, чăхпа чĕпсене епле сапса панине кăтартăр-ха? Чĕпсем тырă сăхаççĕ-и? Пурте сăхаççĕ-и?

Ачасем кăтартаççĕ.

А ч а с е м. Икĕ чĕп анчах тырă сăхать.

В о с п и т а т е л ь. Тата мĕн тырă сăхать?

А ч а с е м.  Чăх.

В о с п и т а т е л ь. Чăх сăмси пысăк (*кăтартать*), чĕпсен вара … (пĕчĕк). Ак çак икĕ чăх чĕппи арçын ача çине пăхать. «Сăхăр, тырă сăхăр. Вăл тутлă», – тет ача чĕпсене. – Арçын ача мĕн калать?

А ч а с е м (*пĕрле тата пĕчченшерĕн*). Сăхăр, тырă сăхăр. Вăл тутлă.

В о с п и т а т е л ь (*занятие пĕтĕмлетсе*). Таня тырă савăтне илсе картишне тухнă. «Кăт-кăт-кăт!» – чĕннĕ хĕр ача. Ун патне тӳрех *чăхпа* унăн *чĕпписем* чупса пынă. Чăх валли тырра Таня пысăк *савăта* сапса панă. Чăх тата икĕ чĕппи тырра *сăхма* пикеннĕ. Чĕпсене сăхма *майлă* пултăр тесе хĕр ача тырра çĕре сапса панă. Ытти сар пепкесем темшĕн сăхман, унталла-кунталла *пăхнă*. Тен, вĕсем *сăхма вĕренеймен*? Шурă кĕпе тăхăннă

арçын ача кукленсе ларнӑ та чӗпсене тырӑ сӑхма хистенӗ: «Сӑхӑр, сӑхӑр! Тырӑ пӗрчисем питӗ *тутлӑ*».

В о с п и т а т е л ь. Хӗр ача мӗн калать?

А ч а с е м. «Кӑт-кӑт-кӑт», – тет хӗр ача.

Воспитатель калава тепӗр хут вулать. Ачасене паллӑ тунӑ сӑмахсене калама хистет. Картинӑна илсе хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, чӑх чӗпписем тырӑ сӑхма кӑна мар, юрӑ юрлама та пӗлеççӗ. (*«Чӑхӑ» юрра юрласа парать.*)

**Чӑхӑ**

Тухрӗ чӑхӑ уçӑлма,
Симӗс курӑк таккама.
Ун хыççӑн чупаççӗ
Сарӑ чӗпписем.

Кӑт-кӑтик, кӑт-кӑтик!
Ан кайӑр-ха аякка.
Урӑрсемпе çимелли
Шырӑр халӗ ак çапла.

Ачасем воспитатель хыççӑн хусканусем тӑваççӗ.

*3-мӗш вӑйӑ*

**Чӑх чӗпписем**

**Тӗллевсем**: [ч], [ш] сасӑсене калама вӗрентесси; итленине ӑнланма хӑнӑхтарасси.

В ӑ й ӑ  й ӗ р к и

Воспитатель Г. Мальцев çырнӑ «Чӑх чӗпписем» калава вулать.

**Чӑх чӗпписем**

Чӑх хӑйӗн чӗпписемпе уничери курӑк çинче уçӑлса çӳрет. Вӑрман енчен хура пӗлӗтсем йышлӑн капланса тухрӗç. Ял çине васкаса шуса килме пуçларӗç.

– Каç пулать, анне çуначӗ айне пуçтарӑнар! – шип-шип туса ыттисене чӗнчӗ пӗр чӗппи.

Ӑна итлесе ыттисем те амӑшӗн çуначӗ айне кӗрсе ларма хатӗрленчӗç.

– Чӗппӗмсем, – астутарчӗ амӑшӗ, – халӗ кӑнтӑр вӑхӑчӗ кӑна. Кусем хура пӗлӗтсем шуса тухрӗç. Вӗсем хӗвел тӗлне пулсан кун тӗксӗмленет.

– Мӗн вӑл пӗлӗт? – ыйтрӗ пӗри.

– Мӗн вӑл хӗвел? – пӗлесшӗн пулчӗ тепри.

– Мӗн вӑл çутӑ кун? – ӑнланасшӑн хыпаланчӗ виççӗмӗшӗ.

Амӑшӗ чӗпписене пӗлӗт çинчен те, хӗвел çинчен те, çутӑ кун çинчен те йӗрки-йӗркипе ӑнлантарчӗ.

– Хӗвел тухрӗ! – сасартӑк кӑшкӑрса ячӗ пӗри.

Пурте таврана саланчӗҫ. Пӗчӗк сӑмсисемпе симӗс курӑка сӑхма пуҫларӗҫ.

В о с п и т а т е л ь. Сире калав килӗшрӗ-и? Чӑх чӗпписем мӗнрен хӑранӑ?

А ч а с е м. Хура ҫумӑр пӗлӗчӗсенчен.

В о с п и т а т е л ь. Чӑх чӗпписем мӗнле сас параҫҫӗ?

А ч а с е м. Шимп-шимп! шимп-шимп!

В о с п и т а т е л ь. Сарӑ чӑмӑрккасем амӑшне мӗнле ыйтусем параҫҫӗ?

А ч а с е м. Мӗн вӑл пӗлӗт?

– Мӗн вӑл хӗвел?

– Мӗн вӑл ҫутӑ кун?

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, эпир чӗпсене епле йыхӑратпӑр?

А ч а с е м. Чип-чип-чип!

**«Чӑхӑ» вӑййӑ**

В о с п и т а т е л ь. Эпӗ чӑх пулӑп, эсир – чӗпсем. Чӑх кӑт-кӑт-кӑт! тет, чӑх чӗпписем шимп-шимп! тесе амӑшӗ хыҫҫӑн чупаҫҫӗ. Кил хуҫи чип-чип-чип! тесен чӑхпа чӗпписем ун патнелле чупаҫҫӗ.

Вӑййа 2–3 хутчен выляма юрать.

*4-мӗш вӑййӑ*

**Тӗрӗс-и е тӗрӗс мар?**

**Тӗллевсем**: ачасене тӗрлӗ ситуацие ӑнланма, мӗн ӑнланнине каласа пама хӑнӑхтарасси; вӗреннӗ сӑвӑсене аса илесси.

В ӑ й ӑ й ӗ р к и

Ку вӑййа ирттерме кӗҫӗн ушкӑнри ӗҫ тетрадӗнчи «Лайӑх тени мӗн тени…» ӳкерчӗксем (йытӑ ҫурине хӳринчен туртакан арҫын ача тата кушак ҫурине сӗт паракан хӗр ача) кирлӗ пулаҫҫӗ. Воспитатель ачасене ӳкерчӗк е тетте кӑтартса мӗн тусан лайӑх, мӗн тума юрманнине ӑнлантарса парать.



В о с п и т а т е л ь. Ку арҫын ача сире килӗшет-и? Йытӑ ҫурине хӳринчен туртсан ыраттарать-ши? Эсир арҫын ачана мӗн каланӑ пулӑттӑр?

А ч а с е м. Йытта кӳрентерме юрамасть. Хӳринчен туртма юрамасть.

В о с п и т а т е л ь. Сарӑ ҫӳҫлӗ хӗр ача килӗшет-и? Мӗншӗн?

А ч а с е м. Вӑл ырӑ кӑмӑллӑ. Кушак ҫурине пӑхать. Ӑна сӗт парасшӑн. Хӗр ача кушак ҫурине юрататъ.

Ачасене ҫакӑн пек тӗрлӗрен тӗслӗхсем памалла: пӗр ача сӑмсине сӑмса тутрипе шӑлать, тепри – хӑйӗн шарф вӗҫӗпе т. ыт. те.

В о с п и т а т е л ь. Пĕр арçын ача çуркуннехи шывра хутран тунă кимĕ иштерет, тепри – хăйĕн машинине шывра иштересшĕн. Хăш ача капитан пулма пултарать?

Ачасем хуравлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Нумай арçын ача капитан пулма ĕмĕтленет, чăн-чăн пăрахут командирĕ пуласшăн. Эпĕ сире А. Ыхра çырнă «Пăрахут» сăвăпа паллаштарасшăн.

**Пăрахут**

Манăн атă – пăрахут,
Ту-ту-тут! Ту-тут! Ту-тут!
Хам çине кушак лартатăп,
Тинĕс урлă эп каçатăп.
Ту-ту-тут! Ту-тут! Ту-тут!
Кил моряк пулма, Хветут!

Воспитатель ачасене сăвă килĕшни çинчен ыйтать. Сăвва темиçе хут вулать. Ачасене «ту-ту-тут! ту-тут! ту-тут!» тесе калаттарать. Çулталăк хушшинче вĕреннĕ сăвăсене аса илме хистет. Воспитатель сăвăсем калама пуçлать, ачасем малалла тăсаççĕ.

*5-мĕш вăййă*

## Тĕрĕс-и е тĕрĕс мар?

**Тĕллевсем**: ачасене пурнăçри тĕрлĕ ситуацисене ăнланса илме пулăшасси (ӳкерчĕк кăтартмасăр); вăйă выляна май сывлăша çăмăллăн вĕрсе кăларма хăнăхтарасси.

В ă й ă  й ĕ р к и

Воспитательпе ачасем тенкелсем çинче çурма çавракара ларăççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*пукане кăтартса*). Ачасем, кĕçĕн ушкăнри пĕчĕк Ванюк пирĕн пата пулăшу ыйтма килнĕ. Вăл пĕлесшĕн: ачасем тăвакан ĕçсем тĕрĕс-и е тĕрĕс мар-и?

В о с п и т а т е л ь. Арçын ача йытта яшка, какай парать. Тепĕр ачи шоколадпа тата канфетпа хăналать. Хăш ачи тĕрĕс тăвать?

А ч а с е м. Яшка тата какай паракан ача тĕрĕс тăвать.

В о с п и т а т е л ь. Пĕр ача урамран кĕрсен курткине вешалкăна çакать, тепĕр ача урайне пăрахать. Хăш ача тĕрĕс тăвать?

А ч а с е м. Япалана вешалкăна çакмалла.

В о с п и т а т е л ь. Ача шывра ишекен кăвакалсене çăкăрпа хăналать; тепри вĕсене курсан патакпа перет. Хăш ачи тĕрĕс тăвать?

А ч а с е м. Кăвакалсене патакпа пеме юрамасть.

В а н ю к. Тавах, ачасем. Эпĕ ăнлантăм.

В о с п и т а т е л ь. Эсир маттур, чӗр чунсене кӳрентерместӗр. Курӑр-ха, кайӑксем вӗҫсе килчӗҫ, вӗсем пирӗнпе вылясшӑн. (*Ачасене сӗтел хушшине ларма ыйтать.*)

Сӗтел ҫинче аслӑ ушкӑнри ачасем хутран ӑсталанӑ кайӑксем выртаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь. Кайӑксене сӑнарӑр-и? Вӗсене хӑвӑр ума хурӑр, аллӑрсене сӗтел ҫинчен илӗр. Уйӑп ҫинчен сӑвӑ итлӗр.

**Уйӑп**

Тусӑмсемӗр, уйӑпа паллатӑр-и?
Ав палан ҫинче ларать. Куратӑр-и?
Тӑккаланӑ ҫинӗ чух ҫырлисене –
Хӗп-хӗрлех хӗретнӗ хӑй пӗсехине.

*Н. Ишентей*

В о с п и т а т е л ь. Кайӑк ҫырла ҫинӗ чухне пӗсехине вараласа пӗтернӗ. Айтӑр эпир ӑна вӗрсе тасатма пулӑшатпӑр?! Воспитатель ачасене мӗнле вӗрмеллине кӑтартса ӑнлантарса парать. (*Ҫӑмӑллӑн, чарӑнса сывлӑш илмесӗр вӗрмелле.*)

Воспитатель сӑвва тепӗр хут вулать. Ачасем вӗреҫҫӗ, кайӑк пӗсехине тасатаҫҫӗ.

*6-мӗш вӑйӑ*

**Шӑши ӑҫта?**

**Тӗллевсем**: сӑвӑ сӑмахӗсене астуса юлса воспитательпе пӗрле калама вӗрентесси; ачасен пуплевне, тавра курӑмне аталантарасси.

В ӑ й ӑ   й ӗ р к и

В о с п и т а т е л ь (*шӑши ӳкерчӗкӗ кӑтартса*). Ку мӗн? Шӑши ҫинчен мӗн пӗлетӗр? Шӑшисем ӑҫта пурӑнаҫҫӗ?

А ч а с е м. Шӑши. Шӑши пӗчӗк.

В о с п и т а т е л ь. Шӑшисем вӑрманта, уйра тата пӳртре те пурӑнаҫҫӗ. Анчах та шӑшисен пӳртре пурӑнма юрамасть, ҫавӑнпа вӗсем ҫынсенчен пытанаҫҫӗ. Вӑрманта тата уйра пурӑнакан шӑшисем хӑйсене валли шӑтӑк тӑваҫҫӗ, йывӑҫ тымарӗсем хушшинче пурӑнаҫҫӗ. Шӑшисене мӗнле чӗр чунсем тытаҫҫӗ?

А ч а с е м. Кушаксем, тилӗсем.

Воспитатель «Шӑши ӑҫта?» шӳтлӗ сӑвӑ вулать.

– Шӑши ӑҫта?
– Шӑтӑкра.

– Шăтăкĕ ăçта?
– Шыв тулнă.
– Шывĕ ăçта?
– Вăкăр ĕçсе янă?
– Вăкăрĕ ăçта?
– Кĕтӳре.
– Кĕтĕвĕ ăçта?
– Улăхра.
– Улăхĕ ăçта?
– Йăлăмра.

Унтан воспитатель сăвва тепĕр хут вулать. Кайран ачасене сăвва рольпе калама сĕнет.

*7-мĕш вăйă*

## Çуркунне, салам!

**Тĕллевсем**: ача сачĕн территорийĕ тăрăх çӳренĕ май çуркунне паллисене тупса палăртасси; ачасене сывлăх сунма вĕрентесси.

Вăйă йĕрки

Воспитатель ачасене урама уçăлма тухсан (е тумланнă вăхăтра) çуркунне паллисене курма каяссине пĕлтерет. Ачасене «хĕл иртсе кайрĕ, çуркунне килчĕ» теме хăнăхтарать.

В о с п и т а т е л ь. Эпир сирĕнпе çуркуннене шырама каятпăр. Вăл пирĕнпе çывăхах пулмалла. Эпир кĕрĕк, ăшă атă-пушмак тата ăшă шапка тăхăннă-и? Мĕншĕн эсир вĕсене хывнă?

А ч а с е м. Тăхăнман. Урамра ăшă.

В о с п и т а т е л ь. Урамра юр пур-и? Вăл ăçта кайса кĕнĕ-ши?

А ч а с е м. Юр çук.

В о с п и т а т е л ь. Çуркунне çитнĕ. Хĕвел хĕртсе пăхнăран юр ирĕлнĕ. Юр çук. Салам, çуркунне!

А ч а с е м. Салам, çуркунне!

Ачасем урамра тин туха пуçланă симĕс курăка шыраççĕ (клумбăри çуркуннехи чечексене), тулнă папкасене, тĕмсем çинчи пĕрремĕш çулçăсене сăнаççĕ. Çуркунне паллисене тĕл пулсан ачасем вĕсене: «Салам, çуркунне!» – тесе сывлăх сунаççĕ.

*8-мĕш вăйă*

## Аса илни

Ачасен чĕлхе пуянлăхне, аталанăвне тĕрĕслеме воспитатель занятие хăйĕн ирĕкĕпе irттерет. Ачасем халăх юмахĕсене аса илеççĕ, вĕсене кăмăла кайнă дидактика вăййисене выляççĕ.

## Тупмалли

Умĕн калани ............................................................................................3
Çурла – авăн уйăхĕсенче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .............4
Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................................8
Чӳк уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем................................ 16
Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ..........................25
Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем...........................35
Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем.............................45
Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ..............................53
Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................................62
Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .................................72

# АЧАСЕН ПУПЛЕВ ХӐНӐХӐВĔСЕНЕ АТАЛАНТАРАССИ

---

# ФОРМИРОВАНИЕ РЕЧЕВЫХ НАВЫКОВ ОБУЧАЮЩИХСЯ

*Методические указания для воспитателей дошкольных образовательных организаций, реализующих образовательные программы дошкольного образования с детьми 2–3-летнего возраста*


Составители *И.В. Ядранская,*
*Л.А. Смирнова*

Редактор *Р.К. Игнатьева*
Верстка *И.В. Матвеевой*

*Использованы иллюстрации из Интернета*

Подписано в печать . Формат 60х90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № .

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии.
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум». г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52.
Тел.: (8352) 32-05-01